ХЫПАР

1925 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнчен пуçласа 1966 çулхи çу уйăхĕччен тĕрлĕ ятпа тухнă, «Хыпар» хаçат пуçарăвĕпе 1996 çулхи кăрлачăн 20-мĕшĕнчен тепĕр хут тухма пуçланă

# Çамрăксен хаçачĕ

Чăваш Республикин Çамрăксен патшалăх премийĕн лауреачĕ

2014, кăрлач, 10, эрне кун, 1 /5990/ №

Хакĕ ирĕкле

WWW.hypar.ru
molgazeta@rambler.ru

эрнелĕх телепрограмма

16+

# Чун туртнă ĕçшĕн грант илессе шанман



**Чăваш Енĕн пултаруллă ар-хĕрĕ Пĕтĕм Раççейри çамрăксен проекчĕсен конкурсне хастар хутшăннă. Пĕлтĕрхипе иккĕмĕш хут иртнĕскере хутшăнма 12500 çын ыйту çырнă. Ĕçсене çамрăксен политикин анлă сарăлнă енĕсемпе – «Çĕнĕлĕхсем», «Сывлăх», «Ертсе пырасси», «Медиа», «Пултарулăх», «Пурăнмалли коммуналлă хуçалăх тата çурт-йĕр хăпартасси» – хатĕрлесе тăратнă. Пĕтĕмпе 1350 çĕнтерÿçе палăртнă. Вĕсен хушшинче пирĕн республикăн 8 çамрăкĕ пур. Чи-чи вăйлисен йышне кĕнисене хавхалантарма уйăрнă нухрат виçи – 120 миллион тенкĕ. Чи пысăк гранта – 300 пин тенке – Екатерина Устинова та тивĕçнĕ. Вăл хăйĕн ĕçне «Ман хыççăн чуп, Чăваш Ен!» проектпа килĕшÿллĕн чупу клубĕсене йĕркелессипе çыхăнтарнă.**

– Пирĕн республикăра «Ман хыççăн чуп!» проект ĕçленĕ май сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансен йышĕ тата та пысăклании савăнтарать. Вĕсем тренировкăсем, тĕрĕс апатланасси çинчен тарăнрах пĕлеççĕ, – кăмăлне пытармарĕ Екатерина. – Чупу клубĕсен проекчĕ çур çул ытла ĕçлет. Конкурса тăратнă ĕçре хамăр мĕн-мĕн пурнăçланине, еплерех улшăнусем пулнине кăтартрăмăр.

Иртнĕ çул проект штабĕсене Етĕрне тата Çĕмĕрле хулисенче, Тăвайра йĕркеленĕ. Унти ар-хĕр те эрнере пĕрре ушкăнпа чупу irттерет. Вĕсем хăйсен тăрăхĕнче пурăнакансене тĕслĕх кăтартаççĕ.

Катьăн вăл суйланă çулпа утакан тус-юлташ нумай. Спортпа туслăскерсем грант çĕнсе илнĕ хĕр уçă кăмăллине, яланах яваплăха туйнине, пуçаруллă пулнине палăртрĕç. Хастарскер пĕлтĕр тата виçĕм çул Пĕтĕм Раççейри çамрăксен «Селигер» вĕренÿ форумне хутшăннă. Нутрициологи енĕпе irттернĕ практика курсĕ витĕр тухнă, фитнес теорийĕ çинчен лекци итленĕ, кулинарсен ăсталăх класĕсенче пулнă.

Тĕрлĕ ташăпа та кăсăкланакан Катя Шупашкарти кÿлмек хĕррипе чупмашкăн çамрăксене кашни эрнере йыхравлать. Вăл ертсе пынипех проект хастарĕсем спорт мероприятийĕсене тăтăшах хутшăнаççĕ. Вĕсем Шупашкар хулин Мускав районĕ йĕркеленнĕренпе 40 çул çитнине халалланă велоквестра ушкăнсен хушшинче 2-мĕш вырăн йышăннă. Пĕлтĕрхи çурла уйăхĕнче Раççей «çăлтăрĕ» иртернĕ массăллă зарядкăна хутшăннă. Шупашкар хулин кунĕнче «Пултарулăх Бульварĕнче» «Ман хыççăн чуп!» проект лапамне 200 ытла çын çитнĕ.

Катя волонтерсене епле явăçтарать-ха? Пике пĕлтернĕ тăрăх – кашни мероприяти иртнĕ хыççăн волонтерсен хисепĕ хушăнать. Уншăн чи лайăх меслет – хастарсем кирли çинчен Интернетра хыпар вырнаçтарни. Çавăн хыççăн çамрăксем Катя патне тÿрех шăнкăравлаççĕ, çыраççĕ, кирлĕ вырăна çитеççĕ. Иртнĕ çулхи авăн уйăхĕнче «Ман хыççăн чуп!» проектпа килĕшÿллĕн йĕркеленĕ Пĕтĕм Раççейри чупăва 300 ытла çамрăк тухнă. Волонтерсене шăпах çÿлерех асăннă меслетпе уçă курса тупнă.

9 ⇨

Хаклă вулаканăмăрсем! “Çамрăксен хаçатне” 2014 çулăн I çуррине илсе тăмашкăн çырăнма маннă-и? Ытлашши ан пăшăрханăр. Юратнă кăларăмăра нарăс уйăхĕнчен пуçласа та илсе тăма май пур. Çак кунсенчех почтальонпа курса калаçăр çеç.

***Тамбовра Олимп çулăмне кĕтсе илмешкĕн 6 метр çÿллĕш калпак çыхнă.***

2 стр. ⇨

***“Сăмах купинчен тăракан юрăсем халăх патне питĕ хăвăрт çитеççĕ”.***

6 стр. ⇨

***Арçын çире пур арăмне те хĕрхенмен – хырăмĕнчен темиçе хутчен тапнă.***

4 стр. ⇨

***Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнче Сурхури иртсен çветке чупасси йăларах.***

8-9 стр. ⇨

***Библи сюжечĕ – пысăк ÿкерчĕксенче.***

5 стр. ⇨

***Юрату гороскопĕ вăрттăнлăхсене уçать.***

12 стр. ⇨

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви

"Хыпар" Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

Директор-тĕп редактор
А.П.ЛЕОНТЬЕВ

● Редакци канашĕ:
М.М.АРЛАНОВ – «Хыпар» Издательство çурчĕн тĕп редакторĕн çумĕ
Н.Н.КАЗАКОВ – ЧР Композиторсен союзĕн ертÿçи
А.П.ЛЕОНТЬЕВ – «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ

● Пирĕн адрес: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Çамрăксен хаçачĕ"
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07.
Электрон почти:
molgazeta@rambler.ru
hypar@chtts.ru
pop408@rambler.ru
Сайт:
WWW.hypar.ru

● Телефонсем:
Редактор
28-83-61
Политика, право, информаци пайĕ
28-84-05
Экономика, социаллă ыйтусен, ял пурнăçĕн пайĕ
62-30-07
Çамрăксен организацийĕсен, çарпа патриотизм, спорт пайĕ
28-83-61
Культура, кăмăл-сипет, çырусемпе массăллă ĕçсен пайĕ
62-30-07

Редактор
Д.А.МОИСЕЕВ

● Издательство директорĕ
В.А.ЧЕМЕРЕВ
Тел. 56-00-23

● Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службi 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ ФС77-54015 номерпе регистрациленĕ.
● Хаçат индексĕ - 54804.

● Ал çырусене рецензилемеççĕ тата каялла памаççĕ

● Дежурнăй редактор
А.В.ТИМКОВА

● Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ компьютер центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.

Тираж 8025.
Заказ 8.

Пичете графикпа 18 сехет те 30 минутра алă пуснă.
18 сехетре алă пуснă.

РЕДАКТОРА – СĂМАХ

# Пирĕн çемьере йыш хушăнчĕ

"Çамрăксен хаçачĕн" вулаканĕсене иртнĕ уявсем ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, Лаша çулĕ пурне те савăнăç кÿтĕр, çирĕп сывлăхпа савăнтартăр, хуйхă-суйхă, инкек-синкек яланах пăрăнса иртчĕр.

Пирĕн çемьере йыш хушăнчĕ! Епле хĕпĕртемĕн-ха? Эпĕ мĕн каласшăннине, хаклă вулаканăмăрсем, тавçăртăр-и? "Çамрăксен хаçатне" куллен вулакансен йышĕ палăрмаллах ÿсрĕ. 2012 çул пуçламăшĕнче пирĕн кăларăм 6497 киле пырса тăратчĕ, пĕлтĕр вăл 7030 çемьене эрне кунсерен савăнăç кÿчĕ. Кăçал вара хаçат тиражĕ 8025-е çитрĕ. 2014 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн Раççей почти урлă çырăннисен йышĕ пысăкланни те пире, редакци ĕçченĕсене, савăнтарать, эпир тĕрĕс çулпа утнине кăтартать.

Республика тулашĕнче пурăнакансем те чăваш яш-кĕрĕмĕпе хĕр-упраçĕ валли Чăваш Республикинче тухса тăракан пĕртен пĕр кăларăма ытларах килĕштерме тытăнчĕç. Иртнĕ çулта вăл аякри йăхташăмăрсен 47 çемйине пырса тăнă пулсан халĕ 99 килте пур! "Çамрăксен хаçатне" кăмăллanисен шучĕ Чĕмпĕр облаçĕнчи Аслă Нагаткинра тата Тутарстанри Кивĕ Çĕпрелте самаях ÿсрĕ. Ахăртнех, хаçат ĕçченĕсем Чĕмпĕр тăрăхĕнчи Кивĕ Улхашра, Тутарстанри Алешкин Саплăк тата Чăваш Çĕпрелĕ ялĕсенче пурăнакансемпе тĕл пулни те витĕм кÿчĕ-тĕр. Хаçатăн кашни номерне Пушкăрт Республикинчи Толбазы салинче, Ĕпхÿ хулинче, Мускавра, Мускав облаçĕнчи Егорьевскра, Самар облаçĕнчи чылай ялта, Тверь облаçĕнчи Осташковра, Волгоград облаçĕнчи Çĕнĕ Николаевăра, Калуга облаçĕнчи Боровскра чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Хамăр республикăра пурăнакансенчен Патăрьел, Шăмăршă тата Елчĕк районĕсенче пурăнакан вулаканăмăрсене тав тăвас килет. Ку тăрăхра "Çамрăксен хаçачĕн" 1277 экземплярĕ саланать, çавăн пекех Канаш, Муркаш, Вăрнар почтамчĕсем урлă çырăнса илекен йышлине палăртмалла.

Тĕнчере глобализаци тапхăрĕ хуçаланнă вăхăтра, кашни килтех компьютер, Интернет пур чухне, çĕр-шывра çĕр-çĕр тĕрлĕ хаçат-журнал тухса тăнă çулсенче эсир "Хыпарăн" пĕрремĕш "ачине" – "Çамрăксен хаçатне" – суйлатăр, ăна килĕштеретĕр. Çакăншăн сире чун-чĕререн тав тăватпăр. Кăçал кăна мар, малашне те хаçат çемйи пысăкланса пырасса, йыш уйăхсеренех хушăнасса шанатпăр. Эпир вара кашни номер ылтăн чăмакки пултăр тесе савăк кăмăлпа тăрăшăпăр.

**Дмитрий МОИСЕЕВ,**
**"Çамрăксен хаçачĕн" редакторĕ.**

ЭПĔ ТЕ КАЛАМ-ХА

# Пĕрисем савăнаççĕ, теприсем...

**Сехет йĕпписем мĕнле хăвăртлăхпа шăваççĕ-ши? Тин кăна пурте çулталăкри чи асамлă уява – Çĕнĕ çула – кĕтеттĕмĕр. Чылайăшĕ, ахăртнех, куç хупса та ĕлкĕреймерĕ – Лаша çулĕ тăпăртатса çитрĕ. Уяв хыçа юлчĕ. Çулталăк вĕçленнĕ май чунра ырă туйăм çеç хуçаланатчĕ. Тем тесен те, çĕнĕ çула кашниех усаллине манса ыррипе çеç кĕме тăрăшать, малашне лайăхрах пурăнма талпăнать. Шел, шухăшлани яланах тÿрре тухмасть. Сăмахăм – Çĕнĕ çул хыççăн пулнă пăтăрмахсем çинчен. Çак ыйтăва хаçатра пĕрре мар сÿтсе явнă-ха, çапах...**

**Тĕрĕссипе, кашни çулах çакнашкал ÿкерчĕк: унта пушар алхаснă, тепĕр çĕрте тăвансемех харкашнă. Лаша хуçаланма тытăнни шутлă кунсем çеç çитрĕç. Пăтăрмахсен шучĕ вара... Мĕншĕн çапла? Мĕнле сăлтавпа? Çак ыйтусем пуçра явăннă вăхăтра хуравĕ тÿрех тупăнчĕ. Тимсĕрлĕх, эрех – шăпах вĕсене пула инкек сиксе тухать. Паллă ĕнтĕ: чылайăшĕ уява хаяр çак шĕвексĕр irттерeймест /сĕтел çине шампань эрехне те пулин лартаççех/. Пĕрисем ăна виçеллĕ ĕçеççĕ тĕк теприсем черкке хыççăн черкке ÿпĕнтереççĕ. Ÿсĕр çын хăтланăвĕ мĕнлереххине ăнлантарма та кирлĕ мар. «Укçапала эрехех çынна ăсран кăларать», – тенĕ-çке Константин Иванов «Нарспи» поэмăра. «Сыхланакана турă сыхлать», – тенĕ ваттисем. Чăнах та, сыхă, тимлĕ пулнине нимĕн те çитмест. Ара, тимсĕрлĕхе пула та инкек сиксе тухать вĕт. Ав раштавăн 31-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи пĕр ялта мунча çунма тытăннă. Ахăртнех, кил хуçисем уяв умĕн çăвăнса тасалма шухăшланă, анчах тимлĕх пирки маннă. Вутă хунă кăмакаран çулăм тухнăран «хĕрлĕ автан» ташлама тытăннă. Пĕр талăкра республикăра тăватă пушар алхаснă: Шупашкарта, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Йĕпреç районĕсенче. Шупашкарта, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи пĕр ялта та мунчасем çунма пуçланă. Ку тĕслĕхсенче кăмакана вăхăтра юсаманран çулăм тухнă. Раштавăн 31-мĕшĕнче сехет вун икĕ хут шаккама пуçлас умĕн, çур сехет маларах, Йĕпреç поселокĕнче гараж çунма тытăннă. Хальхинче «хĕрлĕ автан» çын тимсĕрлĕхне пула ташланă. «Вăрă хăйĕн хыççăн мĕн те пулин хăварать, пушар вара нимĕн те хăвармасть», – теççĕ. Çак сăмахсене хирĕçлеймĕн. Телее, çÿлерех асăннă тĕслĕхсенче пĕр çын та вилмен, пушара çийĕнчех сÿнтернĕ. Çапах шар курнă кил хуçисем Çĕнĕ çула савăк кăмăлпа кĕни иккĕленÿллĕ.**

**Кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнче вара ÿкерчĕк пушшех хăрушă пулнă. Çав кун Чăваш Енре тăхăр пушар алхаснă. Етĕрне хулинче «хĕрлĕ автан» икĕ хут ташланă. Пĕрремĕш тĕслĕхре гараж çуннă. Телее, çулăма çийĕнчех сÿнтернĕ, пушар кÿнĕ тăкак та пысăках мар. Çав кунах кăнтăрла иртсен «01» пульт çине хăрушă тепĕр хыпар çитнĕ: хваттер çунма тытăннă. Çăлавçăсем вырăна тÿрех çитнĕ, çунакан хваттертен кил хуçин 50 çулти тăваннe илсе тухнă. Çăра тĕтĕмпе наркăмăшланнăскере сыватмăша ăсатнă. Кил хуçине вара çăлма май килмен. Пушарнăйсем ăна шыраса тупнă тĕле вăл сывлама пăрахнă. Пĕтĕмпех – сÿнтермен пирус тĕпне пула. Тимлĕрех пулнă тăк...**

**Канмалли кунсенче аслă ÿсĕмрисенчен ытларахăшĕ – килте. Хăшĕ-пĕри ĕçлет ахăртнех. Апла-и, капла-и – ачасене хăйсене кăна хăвараймăн, пăхакан çын кирлех. Шăпăрлансем темĕн тăвасси те инçех мар... Кăрлачăн 2-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи пĕр ялта аслисем пĕчĕккисене сыхласа çитерейменши – çичĕ çулти йĕкĕреш мачча тăрринче шăрпăкпа вылянă. Юрать, сисчĕвленнĕ кÿрши нумай шухăшласа тăман – тĕтĕм тухнине асăрхасанах пушарнăйсене чĕннĕ. Çулăма çичĕ минутранах тĕп тунă, ачасем суранланман.**

**Хăрушă! Хыпарсемпе паллашсан кăмăл пусăрăнчĕ. Пĕрисем уявра савăннă вăхăтра теприсем шар курнă. Эрех-сăраран пăрăнма тăрăшасчĕ. Ÿсĕр çынсем йĕркене пăснă тĕслĕх пирки, вĕсене пула инкек сиксе тухни çинчен тăтăшах илтме тÿр килет. Ĕçкĕççен йышне чакарас тĕллевпе патшалăх та çанă тавăрса ĕçлет. Лавккара çĕрле эрех-сăра сутма чарчĕç. Ав Шупашкара Олимп çулăмĕ килсен кăнтăрла та «хаяррине» сутмарĕç. Çаксене ырламалла çеç. Анчах чи малтан эрех ырри патне илсе çитерменнине çыннăн хăйĕн ăнланмалла. Тем тесен те, тимлĕрех пуласчĕ.**

**Ирина АЛЕКСЕЕВА.**



ОЛИМПИАДА ХЫПАРĔСЕМ

# Пуçланиччен - 28 кун

Кăрлач уйăхĕн 7-мĕшĕнче, Олимпиада пуçланиччен пĕр уйăх юлсан, «Сочи – 2014» йĕркелÿ комитечĕ тĕп медиацентр уçăлни çинчен пĕлтернĕ. Унăн лаптăкĕ – 158 пин тăваткал метр. Вăл икĕ хутлă, Олимп паркĕнчен инçе мар вырнаçнă. Нарăс уйăхĕн 7-23-мĕшĕсенче медиацентр Раççейри 2000 яхăн тата ытти çĕр-шыври массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсене, телекуравпа радио хыпарлавăн 6000 ытла ĕçченне йышăнĕ.

* * *

Брянскра пурăнакансем Олимпиада иртекен хула валли парне хатĕрленĕ. Унта пурăнакан алă ăстисем пысăк кăçатă хатĕрленĕ. Унăн çÿллĕшĕ 1 метр та 80 сантиметр, сарлакăшĕ 1 метр та 50 сантиметр. Парнене хатĕрлемешкĕн 12 килограмм çăм кирлĕ пулнă. Ăстасем ăна 2 эрне йăвалӑнă.

* * *

Раççейри хăш-пĕр аэропортра самолета ĕçмелли шĕвеке çеç мар, парфюмери хатĕрне те, тĕрлĕ сăрăпа геле те, çилĕм те илсе кĕме чарнă. Çакă çывхарса килекен Олимп вăййисенчи хăрушсăрлăха упрассипе çыхăннă. Эмеле те тухтăр сĕнĕвĕ пулсан çеç пĕрле илме ирĕк парĕç.

* * *

Турра ĕненекен спортсменсем валли Сочире кĕлĕ тумалли пÿлĕмсем хатĕрленĕ. Вĕсем кашни Олимп ялĕнчех пулĕç. Нумаях пулмасть çаксене тĕрлĕ тĕне ĕненекенсем хакланă. Кĕлĕ тумалли пÿлĕмсенчи ĕç-хĕле волонтер студентсем йĕркелĕç. Тĕрлĕ тĕне пăхăнса пурăнакан çамрăксене конкурс мелĕпех суйланă.

* * *

Олимп çулăмĕ Тамбова кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнче çитĕ. Çак пулăма халалласа унта Раççейри чи пысăк калпак çыхнă. Ăна тимĕртен хатĕрленĕ ятарлă каркас çине вырнаçтарнă. Унăн çÿллĕшĕ 6 метр. Калпака Тамбоври «Кристалл» спорт керменĕ умĕнче вырнаçтарнă. Ăна Тамбов облаçĕнчи Рассказово хулинче пурăнакан ăстасем хатĕрленĕ. Пуçа тăхăнмалли хатĕре Раççей Ялавĕн тĕсĕсемпе усă курса çыхнă. Унтах Тамбов облаçĕн тата Олимпиада символĕсене вырнаçтарнă. Олимп çулăмĕн эстафетине халалланă спорт калпакĕ Рекордсен Гиннесс кĕнекине «кĕресшĕн». Çакна тума Тамбова унăн тĕп редакторне те чĕннĕ. Палăртса хăварар: ку Олимпиадăпа çыхăннă пĕртен пĕр тĕлĕнтермĕш мар, Пермьре акă пельмень нумай çисе рекорда çĕнетнĕ.

**Любовь ПЕТРОВА.**

ПИРĔН ЫЙТĂМ

# Çамрăксем юмăç пăхаççĕ-и?

**Кăрлач уйăхĕн 6-мĕшĕнче православи тĕнне ĕненекенсем пачах апатланмаççĕ, тÿпене пĕрремĕш çăлтăр тухсан тин шыв ĕçеççĕ, çиеççĕ. Раштавран пуçласа вара чылайăшĕ юмăç ярать. Аслă ăрурисем çак вăхăтра таврара усал вăйсем хуçаланнине ĕненнĕ. Çавна май каçсерен юм юмланă. Хĕрсем хапха урлă кăçатă ывăтнă, каччăсем витене кĕрсе сурăх тытнă. Халĕ çамрăксем юмăç яраççĕ-ши? Çулталăк мĕнпе савăнтарасса пĕлесшĕн-и?**

**Светлана ИВАНОВА, Йĕпреç районĕ, Пăкăян ялĕ:**

– Пирĕн ялти çамрăксем питĕ туслă. Пĕр-пĕр уява хатĕрленмелле пулсан пĕрре чĕнсенех клуба пухăнаççĕ. Кăрлачăн 7-мĕшĕнче каçхине юмăç ярасси йăлана кĕнĕ. Кăçал та хĕрсемпе пухăнтăмăр. Кил умĕнчи картана тытрăмăр. Юлашки ытам мăшăрлă пулсан савни тупăнатех, çук тăк çулталăка пĕччене ирттерме тивет. Юр çине выртатпăр. Ирхине çак вырăнта йытă е кушак чупса иртмен пулсан ку çул пăтăрмахсăр пулать. Ушкăнушкăнпа юмăç пăхнă хыççăн клуба пухăнатпăр. Унта çурта çутатпăр та хут çине кама мĕн кĕтме пултарассине çыратпăр. Çĕçĕ тытса çавăрттаратпăр. Шĕвĕр енĕ чарăннă çĕрти хута уçса вулатпăр. Вăт çаплараx хăтланатпăр.

**Ольга ШМЕЛЕВА, Елчĕк районĕ, Курнавăш ялĕ:**

– Сурхурие халăхпа паллă тăвасси йăлана кĕчĕ. Çамрăксем те, аслă ÿсĕмрисем те çав кун клуба пухăнаççĕ. Хĕр-хĕрарăм чăваш кĕпи тăхăнать, çăпата сырать, юмăç ярать. Хальхинче çаплараx юмларăмăр. Пластмасса тирĕке шыв ятăмăр. Унăн тавра хут çине пуянлăх, сывлăх, йыш хушăнни, çемье чăмăртани тата ытти пулăм пирки çыртăмăр. Шыва янă шăрпăк ăçта чарăнать – çавă ку çулта пурнăçланать. Эпĕ кăçал вĕçкĕн каччăпа паллашасси çинчен пĕлтĕм. Çăпата та ывăтрăм. Тен, ĕмĕтленни пурнăçа кĕрĕ?

**Надежда ДАВЫДОВА, Вăрмар районĕ, Пинер ялĕ:**

– Çамрăксем юмăç яма мар, клуба та тухма пăрахрĕç. Çапах качча кайман хĕрсем пĕрле пухăнсан юмăç пăхни пулкалать. Хапха урлă кăçатă ывăтасси халĕ те чылай ялта сыхланса юлнă, анчах эпир хĕр тантăшăмпа çăм атта мар, урари пушмаках ывăтрăмăр. Манăн вăл кил еннех выртрĕ. Ахăртнех, кăçал та качча тухмăп. Куншăн кулянмастăп. Тепĕр тесен, хам та васкамастăп. Пĕр икĕ çул каялла пÿрте чăх та йăтса кĕнĕччĕ. Ун тавра укçа, тырă, шыв лартса вăл хăш енне утасса тĕрĕсленĕччĕ. Кăçал анне ятлаçрĕ, «Чăхха ĕненсе пурăнаймăн», – терĕ.

**Любовь ПЕТРОВА ыйтса пĕлнĕ.**

БЛИЦ-ИНТЕРВЬЮ

# “Тÿре-шарана та явăçтаратпăр”

**Раççей халăхĕшĕн кăрлач уйăхĕн 11-мĕшĕ – Заповедниксемпе наци паркĕсен кунĕ. Вăл 1916 çулта пирĕн патшалăхра Баргузин заповедникне уçнипе çыхăннă. Ăна 1997 çулта Сын тĕкĕнмен çут çанталăка сыхлакан центрпа Пĕтĕм тĕнчери фонд пуçарнипе пирвайхи хут паллă тунă. Паянхи кун пирĕн çĕр-шывра – 100 ытла заповедник тата 35 наци паркĕ. Чăваш Енре уйрăмах сыхланакан территорисен хисепĕ – 100 яхăн. Вĕсенчен пĕри – федераци пĕлтерĕшли – «Чăваш вăрманĕ» наци паркĕ. Ăна 1993 çулта йĕркеленĕ. Унтанпа мĕнле улшăнусем пулнă-ха? 25200 гектар çĕр çинче вырнаçнă наци паркĕнче Наталия ИГНАТЬЕВА 6 çул ĕçлет. Директорăн экологи пĕлĕвĕ парасси енĕпе ĕçлекен çумĕн тивĕçне пурнăçлаканскер «Чăваш вăрманĕ» пирки мĕн пĕлтерчĕ-ха?**



**– Ÿсен-тăранпа чĕр чунсен тĕнчи пирки пĕлес килет. Çĕр çинчен çухалас хăрушлăхрисен хисепĕ мĕн чухлĕ?**

– Ÿсен-тăран тĕсĕсен хисепĕ кăна 800-е яхăн, вĕсенчен 70-шне Чăваш Енĕн тата Раççейĕн Хĕрлĕ кĕнекисене кĕртнĕ. Эмел куракĕсенчен хăшĕ-пĕри – лантăш, сар çип ути, кĕтмел – талккăшпех ÿсеççĕ. Пысăк чĕр чунсенчен пăшие, упана, хир сыснине, кашкăра курма пулать. Çунатлисен сайра тĕл пулакан тĕсĕсенчен пирĕн паркра орел-могильник, змееяд, хура аист, ÿхĕ пурăнаççĕ. Хĕрлĕ кĕнекене кĕнĕ лĕпĕшсем – аполлон, мнемозина, подалири – питĕ илемлĕ.

**– Туристсене мĕнпе илĕртетĕр?**

– Чăваш вăрманĕнче курса тĕлĕнмелли темĕн чухлех. Сăмахран, «Чăваш вăрманĕн вăрттăнлăхĕсем» сукмак «Чăваш Енĕн çичĕ тĕлĕнтермĕшĕ» республика конкурсĕнче çĕнтернĕ. Пĕтĕмпе çуран çÿрекенсемпе туристсен 8 сукмакĕ уçă. Вĕсен тăршшĕ – 93 километр. «Аваллăх алăкне уçса» сукмака суйлакансене чăвашсен йăли-йĕркипе паллаштарма палăртатпăр.

**– Искусственнăй чăрăш хатĕрлес енĕпе конкурссем йĕркелетĕр. Çакă саккуна пăсса «симĕс пикесене» касакансенчен сыхлас ĕçре пысăк витĕм кÿрет-и?**

– Паллах. Чи малтанах çитĕнекен ăрăва тĕслĕх кăтартма пулăшать, чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕке кăна мар, йывăç-курăка та юратма, упрама вĕрентет.

**– Браконьерсем тустарнă тĕслĕхсем иртнĕ пилĕк çулта пулнă-и?**

– Çук. Пирĕн территорие тĕлленлевлĕн кĕни пулман. Ку енĕпе хуралçăсем питĕ тимлĕ ĕçлеççĕ. Пирĕн наци паркĕнче ĕçлекен 70 ытла çынран 46-шĕ хурал пайĕнчен. Хăш-пĕр чухне сунарçăсем мулкача хăваласа парка кĕрсе каяççĕ. Анчах саккуна «ăнсăртран» пăснисене те пуçран шăлмаççĕ, пысăк штраф тÿлеттереççĕ.

**– «Пăшаллисенчен» кăна хăрамалла-ши?**

– Çук паллах. Вăрман пуянлăхне пушартан та сыхламалла. Наци паркне тунăранпа кунта «хĕрлĕ автан» тăватă хутчен алхаснă. Юлашки хут 1998 çулта. Сиен кÿрекен организмсене тупса палăртассипе, вĕсене тĕп тăвассипе те ĕçлетпĕр.

**– Ачасем, çитĕннисем эсир иртерекен мероприятисене хутшăнаççĕ-и?**

– Ытларах кĕçĕн çултисем хастарлăх кăтартаççĕ. Аслисем пирĕн пата чылай чухне канма килеççĕ. Апла пулин те эпир ачасемпе ар-хĕре кăна мар, тивĕçлĕ канăва тухнисене те, тÿре-шарана та явăçтаратпăр. Вăтăсем тавра пĕлÿ, этнографи енĕпе тĕпчевсем ирттернĕ чухне пуян информаци хатĕрлеме пулăшаççĕ. Тĕрлĕ вĕренÿ заведенийĕн преподавателĕсемпе студенчĕсем тата парк ĕçченĕсем ăслăлăх тĕпчевĕсем йĕркелеççĕ. «Çут çанталăк кун-çулĕ» программăпа килĕшÿллĕн çулталăкĕпех сăнавсем ирттеретпĕр.

**– Иртен-çÿрен урамра çÿп-çап, сăмахран, канфет е чăмлак хутне, пăрахнине курсан асăрхаттаратăр-и?**

– Ун пек хăтланнине курсан тирпейлĕ çын, ахăртнех, асăрхаттарĕ. Шăмăрша килсе курăр-ха – епле таса. Наци вăрманĕ пурри те витĕм кÿрет-тĕр. Ачасем тасалăха пĕчĕклех хăнăхсан ÿссен тавралăха вараламассине шанас килет.

**Елена ТРОФИМОВА калаçнă.**

РЕСПУБЛИКĂРА, ÇĔР-ШЫВРА, ЧИКĔ ЛЕШ ЕНЧЕ

## Ача садне – электрон черет

Çĕнĕ çулта çĕнĕлĕхсем пурнăça кĕме тытăнчĕç. Вĕсенчен пĕри ача садне пырса тивет. Кăрлач уйăхĕнчен пуçласа электрон черете Интернет урлă тăма май пур.

Халĕ ашшĕ-амăшĕ кăсăклантаракан ыйтăвăн хуравне онлайн мелпе те пĕлме пултарать. Ача çуралсанах ăна электрон черете тăратма май пур: sad.edu.cap.ru сайтра регистрациленнĕ хыççăн ашшĕ-амăшĕ ятарлă код илет, унпа усă курса вĕсем черет мĕнле шунине тĕрĕслеççĕ. Вĕренÿ управленийĕн органĕ черет çитнине телефонпа шăнкăравласа е электрон почта урлă пĕлтерет. Ача тĕлĕшпе пĕр заявка çырма, пилĕк учреждени суйлама май пур. Интернетпа çыхăнма май çук тăк ашшĕ-амăшĕ нумай функциллĕ центрсене е вĕренÿ пайĕсене çитме пултарать.

## Çĕнĕлĕхсем пирки

Пĕлтĕрхи раштавранпа «мобильник чуралăхĕнчен» хăтăлма май пур. Ку мĕне пĕлтерет-ха? Тариф, çыхăну пахалăхĕ, хакĕ килĕшмест тĕк кивĕ номера сыхласа хăварса оператора улмаштарма пулать. Куншăн 100 тенкĕ çеç тăкакламалла. Саккунра палăртнă вăхăтпа килĕшÿллĕн оператор ыйтнине пурнăçлĕ.

Хальлĕхе номера хăш вăхăтра куçарассине оператор хăй палăртать. Анчах ака уйăхĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа пурин те пĕрешкел вăхăт пулĕ – 8 кун. Кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пуçласа урамра сим-карта сутма чарнă. Алкоголь тата пирус тĕлĕшпе те çĕнĕлĕхсем пур: кăçал хакланĕç. Утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса киосксенче пирус сутма чарĕç. Кафе-ресторанта чĕлĕм мăкăрлантармалли пÿлĕмсене хупĕç. Çавăн пекех хăна çуртĕнче, пасарта, чарăнура пирус туртма юрамĕ.

## Сывлăхпа спорт кунĕ

Çĕнĕ çулхи канмалли кунсенче чылайăшĕ килте ахаль лармасть. Уйрăмах – сывă пурнăç йĕркине кăмăллакансем. Кăрлач уйăхĕн 5-мĕшĕнче Чăваш Енре сывлăхпа спорт кунĕ иртнĕ.

Çак кун çынсем спорткомплекссене тÿлевсĕр кĕнĕ. Чи анлă мероприяти – йĕлтĕр чупăвĕ – пулнă. Сывлăхпа спорт кунĕсем кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕччен тăсăлĕç. Спорт мероприятийĕсене кашниех хутшăнма пултарать.

## Йÿнĕрехпе

ЧР Транспорт министерстви проект хатĕрленĕ. Унпа килĕшÿллĕн студентсемпе шкул ачисем хула çум пуйăсĕсемпе йÿнĕрех хакпа çÿреме пултарĕç.

Ку проект кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пуçласа çĕртмен 15-мĕшĕччен тата авăнăн 1-мĕшĕнчен тытăнса раштавăн 31-мĕшĕччен пурнăçланĕ. Студентсемпе шкул ачисем билет хакĕн çуррине çеç тÿлĕç, анчах республикăра çула тухсан çеç. Билет туяннă чухне студент е шкул ачи ăçта пурăнни, вăл вĕренекен организаци ăçта вырнаçни пĕлтерĕшлĕ мар.

## Этнографи паркĕн шăпи

Вырăнти тÿре-шара йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн Çĕрпÿ хулинчи истори центрĕнчи халăх паркне урăх вырăна куçарĕç. Мĕншĕн?



Чăваш паркĕн проектне Вячеслав Эткер скульптор хатĕрленĕ. Анчах туса пĕтернĕ тата пулас архитектура палăкĕсем вырăнти священникĕн Вячеслав аттен кăмăлне кайман. Чиркĕве çÿрекенсем район администрацине çитнĕ, тĕне кĕмен чăвашсен палăкĕсемпе кăмăлсăрланнă. Чиновниксем парка урăх вырăна, аякках, куçарма йышăннă. Сăмах май, «Çĕрпÿ» этнографи паркĕн проекчĕ ЧР Культура министерствин грантне тивĕçнĕ. План тăрăх – унта чăвашсен йăлипе килĕшÿллĕн ăсталанă йывăç скульптурăсем, архитектурăсем вырнаçмалаччĕ. Вĕсенчен тăваттăшĕ хатĕрччĕ ĕнтĕ.

**Ирина АЛЕКСЕЕВА хатĕрленĕ.**




# ЙĔРКЕ ХУРАЛĔ ПĔЛТЕРЕТ

**Хĕллехи каникул вăхăтĕнче çулленех преступлени нумай пулать, кăçал та харăсах темиçе уголовлă ĕç пуçарма тивнĕ. Вĕсене кĕскен пăхса тухар-ха.**

## Ывăлне вĕлернĕскере тытса чарнă

Шупашкарти 9-мĕш пилĕк çуллăх проспектĕнчи хваттерсенчен пĕринче раштавăн 31-мĕшĕнче ирех ĕçкĕ пуçланнă – арçынпа хĕрарăм тата вĕсен ывăлĕ уява "хаяррипе" паллă тунă.

Тем хушăра кил хуçин 53-ри мăшăрĕ хăйĕн 26-ри ывăлне хырăмĕнчен çĕçĕпе чикнĕ. Çамрăк çыннăн чĕри çавăнтах тапма чарăннă. Хĕрарăм каланă тăрăх – ÿссе çитнĕ ачи ăна çав кун хытах хĕненĕ: тапнă та, çапнă та... Пÿлĕме темиçе хут кĕрсе хăйне çут тĕнче парнеленĕскере тем те пĕр каласа хăртнă иккен. Хĕрарăм çакна чăтаймасăр çĕçĕ ярса тытнă. Халĕ ăна тытса чарнă, лару-тăрăва малалла тишкереççĕ.

## Сехет вун икĕ хут шакканă чух

Следовательсем палăртнă тăрăх – ку преступлени раштавăн 31-мĕшĕнче çĕрле, лăп та шăп 12 сехетре, пулнă. Кăрлачăн 1-мĕшĕнче хĕрарăм Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç ялĕнче пурăнакан 58 çулти пиччĕшĕ патне хăнана пынă, анчах ăна Çĕнĕ çулпа саламлайман, унăн вилли чăх сарайĕнче выртнă. Сехĕрленнĕ хĕрарăм полицие шăнкăравланă. Йĕрке хуралçисем вилене пăхнă хыççăн арçынна пусмăрласа çут тĕнчерен уйăрнине палăртнă. Преступление кам тума пултарнине те часах тупнă. Вăл – çав ялтах пурăнакан 24 çулти каччă.

Следстви версийĕ тăрăх – вăл, самаях ÿсĕрскер, çав каçхине ентешĕ патне пынă, эрех туянмашкăн укçа ыйтнă. Анчах лешĕ хирĕçленĕ. Çакна кура йĕкĕт кил хуçине тискеррĕн хĕненĕ, урайне çавăрса çапса пуçĕнчен те тапнă. Арçын çавăнтах сывлама чарăннă. Мĕн тумалла? Каччă хăйне айăпласран хăраса ентешĕн кĕлеткине çунтарма шухăшланă, анчах фуфайка ниепле те тивсе илмен. Кун хыççăн вăл вилене картише сĕтĕрсе кăларса пăрахнă та хăй пÿрте кĕрсе телевизор курнă, выртса çывăрнă. Ирхине тăрсан вилене чăх сарайне кĕртсе хунă та тарса çухалнă. Халĕ ăна тытса чарнă, вăхăтлăха ирĕксĕр хăварнă.

## Телевизора пайлайман

Ку инкек çĕнĕ çулăн пĕрремĕш каçхине Çĕнĕ Шупашкарти пĕр общежити пÿлĕмĕнче пулнă. Арăмĕпе упăшки телевизор пайлайман: арçыннăн кулăш кăларăмне курас килнĕ, мăшăрне вара ку программа пачах килĕшмен. Вĕсем харкашма тытăннă. Кил хуçи урайне тĕшĕрĕлсе ансан арăмĕ çĕçĕ ярса тытнă та çурăмĕнчен яшлаттарнă. Чи хăрушши: çак преступлени вĕсен ачисен – 12-ри ывăлĕпе 5-ри хĕрĕн – куçĕ умĕнче пулнă. Арçынна больницăна илсе çитернĕ-ха, анчах тухтăрсем унăн пурнăçне çăлса хăварайман – вăл реанимаци уйрăмĕнче вилнĕ. Халĕ арăмĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă, лару-тăрăва малалла тишкереççĕ.

Çав каçах Шупашкарти пĕр общежитире те тискер ĕç пулнă – 42 çулти арçын хăйĕн кÿршин 41-ри амăшне пăта кăлармалли хатĕрпе 10 хутчен çапнă. Шар курнă хĕрарăм çавăнтах вилнĕ. Айăпланакан тÿрре тухнă тăрăх – Елчĕк районĕнчен ывăлĕ патне хăнана килнĕ хĕрарăм ăна хăйĕн еркĕнĕпе пĕр кравать çине выртма чăрмантарнă.

## Подъездра – çаппа-çарамас

Кăрлачăн 1-мĕшĕнче арçын подъезда тухсан чутах ăнран кайман – ун умĕнчен çаппа-çарамас арçын чупса иртнĕ, вăл кĕпе вĕççĕн таракан хĕре хăваланă. Арçын нумай шухăшласа тăман – кун пирки йĕрке хуралне пĕлтернĕ.

Следстви версийĕ çапларах: Çĕмĕрле районĕнче пурăнакан 28 тата 34 çулсенчи икĕ арçын Шупашкара пĕлĕшĕ патне Çĕнĕ çул уявлама килнĕ. Кил хуçи çывăрнипе тата юлташĕ лавккана тухнипе усă курса унăн савнине черетпе мăшкăлланă. Тахăш самантра пике вĕсенчен хăпса хваттертен тухса тарма пултарнă. Ун хыççăн тумсăр чупакан арçын мăшкăллакансенчен пĕри пулнă та. Икĕ пусмăрçа та тытса чарнă, ирĕксĕр хăварнă.

## Ача кĕтекенскере те шеллемен

Кăрлачăн 6-мĕшĕнче Тăвай районĕн больницин йышăну пÿлĕмĕнче 44 çулти хĕрарăм сывлама пăрахнă. Учĕ çинче суран нумаййине шута илсе уголовлă ĕç пуçарнă. Хĕрарăм кăкăрĕ айĕнче ача та пулнă.

Малтанлăха пĕлтернĕ тăрăх – кăрлачăн 4-мĕшĕнче çак хĕрарăма 49 çулти упăшки эрех ĕçме укça паманшăн хĕненĕ. Мăшăрĕ ача кĕтни те чарман ăна – вăл арăмне хырăмĕнчен те темиçе хутчен тапнă. Хĕрарăм кăрлачăн 5-мĕшĕччен асапланнă – çĕрле унăн хырăмĕ ÿкнĕ. Вилĕ пепкене арăмĕпе упăшки курупкана чиксе картише илсе тухнă. Тепĕр кун ирхине амăшĕ хăйне япăх туйнине ывăлĕсем асăрханă та больницăна илсе кайнă, анчах унăн пурнăçне çăлса хăварайман. Кил хуçине тытса чарнă, вăхăтлăха ирĕксĕр хăварнă, ĕç-пуçа малалла тĕпчеççĕ.

**Никита АНДРЕЕВ хатĕрленĕ.**

ЮТ ÇĔР-ШЫВРА

# "Нумайăшĕ пурăнма яла куçать"



**Ют çĕр-шыв культури, унти пурнăç интереслентернĕрен мĕн пĕчĕкренех вĕсем çинчен ÿкернĕ телекăларăмсене пăхаттăм, кĕнекесем вулаттăм. Çапах ют çĕр-шыв çыннипе курса калаçни чылай лайăхрах. Чăваш Ене чикĕ леш енчен туристсем çав тери йышлăн килеççĕ теме çук. Пирĕн республика çинчен пĕлекен сахал. Нумаях пулмасть словак каччипе паллашма тÿр килчĕ. 25 çулти Андрэй Храстина Словак Республикинчен килнĕ. Чадца хулинче çуралнăскер Турзовка салинче ÿснĕ. Унта вăл 21 çула çитиччен пурăннă. Шкулта вĕреннĕ чухне физикăпа математикăна кăмăлланă, чукун çул инженерийĕпе кăсăкланнă. Самолета, пуйăса, автомашинăна тата ытти транспорта юсама вĕренмешкĕн ĕмĕтленнĕ. Çавăнпа 9-мĕш класс пĕтерсен Чадца хулинчи машиностроени техникумне кĕнĕ. Тĕрлĕ механизма юсакан механик специальноçне алла илнĕ. Дипломлă пулсан Жилина хулинчи чукун çул транспорчĕн университетне вĕренме кĕнĕ. Унтах вырăс чĕлхипе культури пирки пĕрремĕш хут пĕлнĕ.**

**– Андрэй, Çĕр чăмăрĕ çинчи миçе çĕр-шывра пулса куртăн?**

– Хальччен Серби, Чехи, Польша, Украина, Венгри, Хорвати çĕр-шывĕсене çитсе куртăм. Сербие вăтам шкул пĕтерсен çул тытрăм, унта водительре çÿр çула яхăн ĕçлерĕм. Словакие таврăнсан альпинизмпа интересленнĕрен тепĕр çур çул Карпат тăвĕсем çинче çăлавçăра ĕçлерĕм, анчах сивве пула ура тата алă сыпписем ыратма тытăнчĕç, ку ĕçе пăрахрăм.

**– Пирĕн тăрăха мĕнле тĕллевпе çитрĕн?**

– Раççее килесси пирки тахçанах ĕмĕтленеттĕм, вăл 6 уйăх каялла пурнăçланчĕ. Европăри волонтерсен центрĕ урлă Раççее тÿлевсĕр килме май пуррипе усă куртăм. Словакпа вырăс чĕлхисем славян ушкăнне кĕреççĕ, çавăнпа вырăс чĕлхи питĕ килĕшет. Пĕр пек сăмахсене асăрхасан çав тери савăнатăп.

**– Волонтер пулса тĕнче касса çÿретĕн, çакă сана пурнăçра усă кÿрет-и?**

– Волонтер пулни пурнăçра нумай пулăшрĕ, тĕрлĕ тăрăха çитсе çынсен пурнăçĕпе, халăхсен культурипе паллашрăм. Пĕчĕк чухне эпĕ Раççей çинчен нимех те пĕлмен. Телекуравпа Америка, Европа, Африка çинчен тăтăшах кăтартаççĕ. Раççей пирки вара телекăларăм çукпа пĕрех. Эпĕ Камчаткăпа Урал çинчен çеç курнă. Вырăс кинофильмĕсене тупма пушшех йывăр – Словакире «Морозко» тата «Адмирал» ятлисене çеç курма май пулчĕ. Çавăнпа нумай словакшăн Раççей халĕ те упасемпе, сивĕ хĕлпе çеç çыхăннă. Эпĕ çула тухма пуçтарăннине пĕлсен пĕлĕшсем: «Раççее ан кай, каялла килейместĕн. Çул-йĕрĕ юсавсăр, унта мафи хуçаланать – пĕтетĕн», – терĕç. Халĕ вĕсем каланине аса илетĕп те йăл кулатăп. Эпир Раççей пирки нимĕн те пĕлместпĕр иккен. «Тутарсем тахçанах вилсе пĕтнĕ, Раççейре вырăссем çеç пурăнаççĕ», – шухăшлаттăм эпĕ. Чăвашсем пирки вара кунта килсен çеç пĕлтĕм. Çак çур çулта Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче, Шупашкарти ачасемпе çамрăксен пултарулăх керменĕнче презентацисем йĕркелерĕм, реабилитаци центрĕсене çÿрерĕм.

**– Пирĕн тăрăхра, уйрăмах хуласенче, ачасем тăван чĕлхепе мар, вырăсла калаçаççĕ. Сирĕн ку енĕпе лару-тăру еплерех?**

– Патшалăх чĕлхине словаксем питĕ хисеплеççĕ, çĕр-шывра кашниех ăна вĕренет. Словак Республикинче венгрсемпе чехсем те шкулта словакла вĕренеççĕ. Венгрсем хăйсен чĕлхипе ытларах вĕрентесшĕн пулин те словаксем парăнмаççĕ, хăйсен чĕлхишĕн кар тăраççĕ. Халĕ тĕнчипех акăлчанла вĕренеççĕ пулин те эпĕ ăна килĕштерместĕп, тăван чĕлхе пуласлăхĕшĕн çунатăп.

**– Çемье çавăрма ĕлкĕртĕн-и?**

– Эпĕ хальлĕхе авланман, тăван тăрăхра атте-аннепе пысăк çуртра пурăнатăп. Манăн пичче пур. Ăна атте ятне панă. Словаксем документра ашшĕ ятне нихăçан та çырмаççĕ. Арăмне упăшкин хушамачĕ килĕшмесен вăл хăйĕннех хăварать.

**– Сирĕн туй йăли-йĕрки сыхланса юлнă-и?**

– Пирĕн тăрăхра туй хăйне евĕр иртет. Каччăн хĕр илес тесен чи малтанах унăн килĕн алăкĕ умне тăрăхла хунă пĕренене пăчкăпа татмалла. Каччă вăйлă та ĕçчен пулнине пĕлтерет ку. Ĕлĕк йĕкĕт пĕренене касаймасан хĕре качча паман. Халĕ арçын вăйсăртарах пулсан ку йăлана ирттермеççĕ, урăх ĕç тума хушаççĕ. Туя костелра /католиксен чиркĕвĕ/ турăш умĕнче регистрациялеççĕ. Эпĕ пурăннă тăрăхра, Чадца районĕнче, пурăнакансен 95% католик. Кашни вырсарни кун пурте тенĕ пекех костела утаççĕ. Çынсем хăйсене сăпайлă тытма тăрăшаççĕ. Çыраннăмасăрах арлă-арăмлă пурăнакан каччăпа хĕре çылăха кĕнĕшĕн айăплаççĕ. Аслă ăрурисем çакна йышăнмаççĕ.

**– Тăван тăрăхупа мăнаçлан-ха.**

– Словак Республики машиностроенипе палăрнă. Республика автомобильсем кăларассипе тĕнчере пĕрремĕш вырăн йышăнать. Кунта кашни 20 çеккунтра конвейер çинчен çĕнĕ машина анать. Вĕсем питĕ нумай: Франци, Китай, Германи маркисем. Пирĕн патшалăх – аграри тата индустри çĕр-шывĕ. Кунта йĕлтĕрпе ярăнмалли ту курорчĕ нумай. Эмел тăвас тата фармацевтика таварĕсем хатĕрлес ĕç те анлă сарăлнă. Замок, кермен нумаййи туристсене илĕртет. Çĕр хăвалĕ нумай. Хуласем питĕ хитре. Кăнтăр енче ял хуçалăх ĕçĕпе ытларах аппаланаççĕ. Колхозсем сыхланса юлнă. Халăхăн 85,8% – словак, венгрсен йышĕ – 9%.

**– Чăваш Енри ял-салана çитсе куртăн-и? Вĕсем сирĕннисенчен уйрăлса тăраççĕ-и?**

– Çур çулта кунти нумай ялсалана çитрĕм. Красноармейски, Муркаш районĕсенче пултăм. Çулла ача-пăча лагерĕнче ĕçлерĕм, «Çамрăксен хули» форумпа паллашрăм, унта хамăн çĕр-шыв çинчен каласа кăтартрăм. Чăваш Енре пирĕн тăрăхра çук таварсене тупса илме пулать. Мана хура тул пăтти тата Шупашкарти кондитер фабрики кăларакан тĕрлĕ печени кăмăла кайрĕç. Пирĕн ялсем чылай расна. Вĕсем хуласенчен инçех мар, вăтамран 18 çухрăмра, вырнаçнă. Çуртсем 3-4 хутлă, мĕншĕн тесен ывăлсем çемье çавăрсан тĕп çуртрах юлаççĕ, тепĕр хутра çеç пурăнаççĕ. Халĕ нумайăшĕ пурăнмашкăн яла куçма тытăнчĕ. Сывлăш тасарах пулнипе, пахча çимĕç туса илме, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме май пуррипе çыхăннă ку. Хуласене вĕренме, ĕçлеме тата тавар туянма çеç çул тытаççĕ. Эпĕ, ялта пурăннăскер, хулари шкула велосипедпа çÿреттĕм. Унта 45 минутрах çитеттĕм.

**– Сирĕн çĕр-шывра мĕнле професси хисепре?**

– Словакире çамрăксем тухтăра, инженера, программиста вĕренме тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен ĕç укçи пысăк.

**– Çĕнĕ çула епле уявларăн? Сирĕн енче ăна мĕнле паллă тăваççĕ?**

– Çĕнĕ çула Шупашкарта кĕтсе илтĕм. Словакире Раштав уявĕ анлă сарăлнă. Ăна раштавăн 24-мĕшĕнче уявлаççĕ. Пирĕн тăрăхра кашниех пĕчĕк Иисуса хăйĕн ĕмĕтне калать, ăна никам та нихăçан та курман. Çак кун кашни килтех пысăк сĕтел хатĕрлеççĕ. Купăста яшки, карп пулă пĕçереççĕ, çĕр улми салачĕ хатĕрлеççĕ. Чăрăш пирĕн тăрăхри уява нимĕçсенчен XVIII ĕмĕрте куçнă. Унччен ăна илемлетмен. Пирĕн тăрăхра Хĕл Мучипе Юр Пике çук, вĕсем вырăнне Çветтуй Николай килет, Хĕл Мучи тумĕллĕскер кашнинех пылак çимĕçпе хăналать.

**– Чăваш Ен килĕшет-и? Тăван тăрăха кайсан ун çинчен каласа кăтартăн-и?**

– Мана кунта питĕ килĕшрĕ. Каласа кăтартмалли ырри çеç. Шупашкарта нарăс уйăхĕччен пулăп. Чăваш Ен питĕ килĕшнĕрен çултăлăкран кунта укçа тÿлесе килме палăртрăм.

**Алена ТИМКОВА.**

ПУЛТАРУЛĂХ

**Нева шывĕ çинчи хулана кайсан Катя Подоплелова /халĕ – Ярмощук/ çыран хĕррипе, урамсем тăрăх тулли кăмăлтан çÿренĕ. Балти сывлăшĕпе сывласа ватă, çав вăхăтрах ялан çамрăк курăнакан Питĕр хулипе киленнĕ.**



# Библи сюжетне тĕпе хурса ÿкерет

– Эпир, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУн ÿнерпе графика факультечĕн студенчĕсем, çĕр-шывăн çурçĕр тĕп хулине практикăна кайрăмăр, – аса илчĕ Екатерина. – Унти архитектурăна тĕпчерĕмĕр, тĕнчипе паллă ăстасен пултарулăх техникине вĕренмешкĕн музейсене çитрĕмĕр. Çывăхри Петергофа, Павловска кайса куртăмăр.

Питĕрти национальноçсен музейĕнче пĕлтĕрхи авăн уйăхĕнче курав ирттернĕ. Унта Йошкар-Олари ÿнер училищинчен вĕренсе тухнисен ĕçĕсене тăратнă. Вĕсен хушшинче Екатерина Ярмощукăн психологи портречĕн жанрĕпе ăсталанă ÿкерчĕкĕсем те пулнă. Вăл куравсене 2007 çултанпах хутшăнать. Тольяттире йĕркеленĕ Пĕтĕм Раççейри «Ăсталăх пусми» выставкăра Катя икĕ номинацире – «Сăн-питĕн академи ÿкерчĕкĕ», «Портретăн академи живописĕ» – палăрнă.

Çÿллĕ шайра иртнĕ олимпиадăра çакăн пек çитĕнÿ ахальтен туман. Çут çанталăк панă пултарулăхсăр пуçне вăл мĕн пĕчĕкрен ăстасен хушшинче çитĕнни те витĕм кÿнĕ-тĕр. Кил вучахĕн управçи – ÿнерçĕ. Вăл хăмана тата тăварлă чустаран хăех хатĕрленĕ пуканесене тĕрлĕ сăрăпа илемлетме юратать. Çемьери аслă хĕр Катя та ÿкерÿпе кăсăкланнă, ку енпе хăй тĕллĕнех аталаннă, ÿнер шкулне пĕтернĕ. Ĕçченскер тĕллев патне çитме яланах ăнтăлнă, çавăнпах мĕн шухăшлани пурнăçланнă.

– Пире Йошкар-Олари ÿнер училищинче тĕлĕнмелле пултарулă педагогсем вĕрентрĕç, – мăнаçланчĕ Екатерина. – Ÿкерÿпе композици дисциплинине Игорь Мясников ертсе пычĕ. Живопиç вăрттăнлăхне Питĕрти ÿнер академине пĕтернĕ Валерий Чеботкин уçрĕ. Вăл каярахпа Хусанта Харис Якупов мэтрăн пултарулăх лаççинче аталаннă. Университетра та пирĕнпе юнашар чăн-чăн маçтăрсем пулчĕç. Сăмахран, олимпиада умĕн ушкăн ертÿçи, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ÿнерçи Анатолий Данилов пирĕнпе çине тăрса ĕçлерĕ. Раççей шайĕнче ирттернĕ куравсенчен пĕринче эпĕ гран-прие тивĕçрĕм. Анатолий Васильевич та виçĕм çул «Кăмăл /натура/ программисемпе усă курмаллине кăтартакан вĕрентÿпе методикăн чи лайăх хатĕрлевĕ» номинацире палăрса гран-при илнĕ.

Екатерина Подоплелова университетра общество ĕçне хастар хутшăннă. 2007 çул хĕршĕн чи ăнăçлисенчен пĕри пулнă. Çав çул вăл живопиç енĕпе ирттернĕ Пĕтĕм тĕнчери конкурс лауреачĕ пулса тăнă. Тепĕр уйăхран республика шайĕнчи «Çамрăксем тата пултарулăх» фестивальре «Ÿнер пултарулăхĕ» номинацире 1-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Ытти конкурсра та палăрнă пике.

– Пĕлтĕр эпир, тăватă студент, паллă ÿнерçĕн мăнукĕн ывăлĕ Костя Кокель, Миша Федосеев, Сережа Аликов тата эпĕ, ÿнерпе графика факультетĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн диплом илтĕмĕр. Манăн квалификаци ĕçĕ – «Соломей ташши». Библи сюжечĕ тăрăх хатĕрленĕ «Ирод патшан ĕçкиçики» ÿкерчĕке вĕренÿ корпусĕнчи экспозицие вырнаçтарнă.

Çамрăк ÿнерçĕ тăван факультетра иккĕмĕш çул ĕçлет. Педагог ĕнентернĕ тăрăх – вăл вĕренÿ вăхăтне студентсемпе ĕçлесе епле ирттермелли программăна хăй хатĕрленĕ. Пĕлÿ пухакансене усăллă сĕнÿ-канашпа яланах пулăшать – хăй те студент ретĕнчен нумаях пулмасть кăна тухнăскер çамрăксене лайăх ăнланать.

Педагогика ĕçĕнчен пушаннă вăхăтра Катя пĕлĕвне тарăнлатать, стенана илемлетессипе аппаланать. Екатерина Валерьевна тĕрлĕ ташăпа та кăсăкланать. Уйрăмах Бразили ташшине /зук/ кăмăллать, ăна хусканусенче кăмăла туллин кăтартма май пуррипе килĕштерет.

Ÿкерчĕкпе искусствăсен теорийĕсемпе историйĕн кафедрин аспирантки /ăслăлăх ертÿçи Ю.Викторов/ психологи портречĕн жанрне ытларах кăмăллать. Истори тата Библи сюжечĕсене тĕтăшах аса илет. Екатерина Ярмощук пултарулăхĕнче классика реализмĕн шухăшне тăсни тĕп вырăн йышăнать.

**Людмила КУТЬИНА.**



ВĂРĂ-ХУРАХ

# Водительсен айванлăхĕпе усă кураççĕ

**Офисран тухнă «Ceat-TOLEDO» автомашина хуçин аллинче пир борсетка пулнă. Арçын айккинелле пăрăнсанах унчченех ăна сăнанă вăрă сулахай енчи малти урапана шăтарнă. Кăлтăка асăрханă хуçа урапапа аппаланнă, анчах алăка питĕрме шухăшламан. Салонра вара укçа тата хаклă хутсем чикнĕ сумка выртнă.**



Сăтăр кÿрекене ЧР ШĔМĕн уголовлă шырав управленийĕн районсен хушшинчи пайĕн ĕçченĕсем асăрханă, çавăнпа малалла мĕн пуласси̇не тÿрех пĕлнĕ. Йăнăшман: тепĕр темиçе минутранах борсетка вăрлас енĕпе «специалиста» тухнă çамрăк иномарка патне васкамасăр утнă. Пассажир лармалли малти алăк умне пĕшкĕннĕ те кĕçех тăрса утнă. Аллинче борсетка пулнă. Усал шухăшлăскере оперативниксем çул урлă каçнă-каçман тытса чарнă.

Водитель таврара мĕн пулса иртнине асăрхаман, çаплах урапа улăштарнă. Йĕрлевçĕсем «тимĕр урхамах» хуçинчен унăн сумка пулнипе пулманни пирки ыйтнă. «Мĕншĕн пулнă? – тĕлĕннĕ хайхискер. – Вăл халĕ те пур, салонра выртать». Полицейскисемпе пĕрле автомашина салонне пăхсан кăна хăйне çаратнине ăнланнă.

Çакнашкал айванлăхран кулас килет, анчах водительсем чылай чухне хаклă япаласене салонра хăвараççĕ, автомашина алăкĕсене питĕрмеççĕ. Вăрăсем хăйсен тĕллевне пурнăçлама урапасене ятарласа шăтарни пирки, ахăртнех, руль умĕнчисем пурте илтнĕ, пĕлеççĕ. Вĕсем айван пулни кукăр алăллисен ĕçне çăмăллатать çеç.

Çаратакансем çăкăр-тăварлăх «ĕçлесе» илеççĕ, анчах çакă ирĕкре пулнă чухне кăна çитет. Борсетка вăрланă 42-ри çав арçыннăн икĕ тĕпренчĕкне текехрен кам тăрантарĕ-ши? Тен, криминаллă бизнесри «ĕçтешĕсем» пулăшĕç? Вĕсем халĕ те темĕн чухлех. Икĕ ача ашшĕ пĕлтĕр те çу кунĕсенче полици аллине çакланнă. Йĕплĕ пралук леш енче те пулнăскер юлашки хутĕнче наркотикпе туслашнăшăн айăпланнă. Тĕрĕссипе, Шупашкарта пурăнаканскер ерех-сăра та тиркемест – пĕр «киленĕç» теприне кансĕрлемест имĕш.

**Ольга ПАВЛОВА, ЧР ШĔМĕн ĕçченĕ.**

НАРКОМАНИ

# Ют пахчасем тăрăх

**Тăвай районĕн прокурорĕ Оксана Ястребова каланă тăрăх – Вăрмар район суче Канаш хулинче пурăнакан Денис Ялкеев тĕлĕшпе приговор вуланă, ăна РФ УКн 228-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе килĕшÿллĕн айăпланă.**

25-ри каçчă пĕлтĕрхи çурла уйăхĕн 25-мĕшĕнче асăннă хуларан Тăвай районне кайнă. Мĕнле тĕллевпе çула тухнă-ха вăл? Кăнтăрла иртни виçĕ сехет тĕлнелле Тĕмере çитнĕ яша ялти пĕр çын асăрханă. Çамрăка хăйĕн тăрăхĕнче ку таранччен курманран тата хайхискер ют пахчасенче темĕн шыраса çÿренĕрен полицие шăнкăравланă. Йĕрке хуралçисем хутаç йăтнă Дениса çырмара утнă чухне асăрханă. Пакунлисене курсан каччă хутаçа пăрахнă та тарма хăтланнă, апла пулин те вĕсен аллине çакланнă. Ялкеев хăйĕн валли мăкăнь пуçтарма Канашран килнине каланă. Пĕр уйăх каялла наркотик тутаннăскер унсăр пурăнаймасть имĕш. Ял лавккинчен инçех мар ăна автомашина кĕтнĕ. Унăн хуçи Ялкеев тĕллевне пĕлмен, вăл пĕлĕшĕсем патне кĕнĕ тесе шухăшланă.

Çамрăка çав кунах тытса чарнă. Суд вăл хăйĕн айăпне йышăннине, ÿкĕннине кура тата каччă ĕçе вырнаçнине, ун пирки лайăх каланине шута илсе 15 пин тенкĕ тÿлеттерме йышăннă. Денис Ялкеев айăплине çирĕплетекен мăкăнь улăмне тĕп тума полици уйрăмне хушнă.

# Айăпне йышăннă та...

**Шупашкар районĕн прокуратури суда уголовлă ĕç ярса панă. Ăна кам тĕлĕшпе тата мĕнле преступлени тунăшăн пуçарнă-ха?**

Шупашкар районĕн прокурорĕн çумĕ Анатолий Иванов пĕлтернĕ тăрăх – ку тĕслĕхре саккуна хирĕçле ĕçе 25-ри каччă тунă. Питтукассинче пурăнакан Олег Федоров иртнĕ çулхи раштав уйăхĕн пуçламăшĕнче Мускав облаçĕнчи Железнодорожный хулинче пулнă. Унтан вăл пушă алăпа таврăнман. Следстви тупса палăртман çынран гашиш туяннă.

Çамрăка йĕрке хуралçисем Арккассинче раштавăн 11-мĕшĕнче тытса чарнă. Унăн çумĕнче пысăк виçеллĕ наркохутăш – 3,578 грамм гашиш – пулнă. Наркотике саккунсăр майпа туяннине тата упранине Олег Федоров йышăннă. Уголовлă ĕçе кĕске йĕркепе пăхса тухма палăртнă. Çакна дознаватель хирĕçлемен. Кĕске йĕркепе тĕпченĕ чухне айăплав вăхăчĕ икĕ хут сахалрах пулать.

**Елена ВЛАДИМИРОВА.**

**Тата тепĕр çул ĕмĕрсен авăрĕнче таврăнми çухалчĕ. Культура çулталăкĕ 2014 çул алăкне яри уçрĕ. Мĕнлерех пулĕ-ши çак çул? Мĕнпе савăнтарĕ? Ку çулталăкра культурăллăрах пулăпăр-ши? Усал сăмахсемпе ятлаçма, наркотикпе айкашма, эрех ĕçме, пирус туртма пăрахса пĕр-пĕрне ырлăхпа телей сунма, ниме мелĕпе пулăшма, ăнланма, каçарма пултарăпăр-ши? Тен, мăн асатте-асанне вĕрентсе хăварнине тата та ытларах çухатăпăр, глобализаци юхăмне парăнса европăланăпăр, тăван чĕлхене, йăла-йĕркене, тĕрре-çĕвве, юрра-ташша мансa ытти халăх хушшинче çухалăпăр?.. Чăвашлăх хăтлăхне, унăн культурине упраса хăварасси, ачамăрсене аслă ăрусем хывнă анлă çулпа утма вĕрентесси хамăртан çеç килет. Çак ыйтусем тавра калаçма ЧР Халăх пултарулăх çурчĕн специалисчĕ, кĕвĕсемпе сăвăсен авторĕ, юрăç, Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен «Кĕмĕл сасă» фестиваль лауреачĕ Светлана ПЕЧНИКОВА килĕшрĕ.**

# “Манăн чăваш пулсах пурăнас килет”



**– Светлана, эсĕ халăх пултарулăх çуртĕнче 8 çул ĕçлетĕн. Юлашки çулсенче хăвăн кун-çулна культурăпа тата тачăрах çыхăнтартăн. Раççей шайĕнче Культура çулталăкне ирттерес тенине еплерех хаклатăн?**

– Ку йышăну культура тытăмĕнче ĕçлекенсемшĕн çеç мар, анлă çĕр-шывăмăрти мĕн пур халăхшăн та питĕ кирлĕ пулăм. Тен, ертӳçĕсемпе тĕрлĕ шайри пуçлăхсем культурăна аталантарас тесе ытларах тăрăшĕç? Тен, пирĕн ĕç укçине кăштах та пулсан ӳстерĕç?

**– «Культура» сăмах питĕ анлă пĕлтерĕшлĕ, эсĕ вара ăна еплерех ăнланатăн?**

– Паллах, чи малтан çак ăнлав кашни çын хăйне обществăра еплерех тытнипе çыхăннă, унтан вăл халăх культурине пĕрчĕн-пĕрчĕн куçать. Ку вара – кашни нацишĕн сĕм авалтан пĕр тĕвве пухăннă пурнăç тытăмĕ, ламран лама куçнă кун-çул йăли-йĕрки. Пирĕн хамăр çемьесенче несĕлсем тăван халăхăн ĕмĕр-ĕмĕр упрайнă культурине пуянлатса малалла аталантармалла.

**– Килĕшетĕп санпа, культурăллă пулма ача чи малтан çемьере аслисенчен вĕренет. Енчен те унăн ашшĕ-амăшĕ ĕçкĕç е какал пулсан…**

– Ун пек чухне ачана хăйне обществăра тытма малтан урам вĕрентет, унтан тин шкул. Ял ачи кӳршĕ-аршă еплерех пурăннине курса çитĕнет, хула ачи ăнăçлăрах – вăл садике çӳренĕ май унта аванрах воспитани илет. Çапах ашшĕ-амăшĕ хăйсен кашни сăмахĕпе, тĕслĕхĕпе тата хăтланăвĕпе ăна витĕм ытларах кӳрет. Сăмахран, садикре пепкесене усал сăмахсем калама вĕрентмеççĕ, анчах киревсĕр çак сăмахсене килте илтнĕскерсем вĕсене ачасен ушкăнĕнче ирĕклĕнех калаççĕ. Шкулта вĕренекенсем пĕр-пĕрне курса тата юлташĕсем хистенипе пирус туртма хăнăхаççĕ. Хăшĕ-пĕришĕн тус-пĕлĕшĕ ашшĕ-амăшĕнчен те ят-сумлăрах. Килпе урам хушшинче çитĕнекен ача икĕ питлĕ те ӳсме пултарать, мĕншĕн тесен икĕ вăй хушшинче ăçта тĕрĕслĕх, ăçта ултав иккенне ăнкарма йывăр.

**– Ялпа хула çамрăкĕсем, санăн шухăшупа, пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?**

– Ял ачи чăваш культурине çывăхрах туйса ӳсет, мĕншĕн тесен вăл пурăнакан хутлăх чăвашлăха çывăхрах: кунтах тăван чĕлхе те, вăйăсем те, юрă-ташă та... Тусĕсемпе хутшăннă чухне те ял йăли-йĕркин саккунĕсене ăса хывать, унта кашни çын пĕр-пĕрне сăнран та паллать, ятран та пĕлет. Хула ачи вара пĕр подъездра пурăнакансене те пĕлмест, анчах унăн ăс-тăн енчен аталанма май ытларах: тĕрлĕ кружок, секцисем пур... Хулари чăваш ачисем, ялтисемпе танлаштарсан, ыттисемпе часрах пĕр пекленеççĕ. Чылай чухне ашшĕ-амăшĕ те вĕсемпе килте вырăсла çеç калаçать.

**– Эсĕ те ман пекех ялтан тухнă, Комсомольски районĕнчи Тукай ялĕнчен. Сана та тăван ял воспитани панă. Шупашкарта тĕпленсе пурăнатăн, икĕ ача амăшĕ. Кун-çулна чунна çывăх ĕçпе çыхăнтартăн. Хăв мĕн шухăшлани-ĕмĕтленнине веçех тăвататăн-и?**

– Манăн ĕç культурăпа тачă çыхăннă. Ĕç планĕпе килĕшӳллĕн республикăри ал ăстисемпе мĕн пур ĕçе пĕр çăвартан тăватпăр. Çак чăнлăха ăнлантăм: пĕр енлĕ çеç ĕçлеме юрамасть. Ал ăстисен пурнăçĕ тĕрлĕ енлĕ: кунтах тĕрĕçĕсем, пир тĕртекенсем, йывăçран эреш касса кăларакансем, тăмран тем те пĕр ăсталакансем, пукане-сувенир тăвакансем, чăваш тĕррине пăхăнса тумтир çĕлекенсем... Илемлĕ те паха çак енсене пĕр шайра аталантарма тăрăшмалла.

**– Тăвакан утăмусем çирĕп пулаççĕ пек-и?**

– Республика шайĕнчи куравсем куракансене килĕшеççĕ. Тин çеç ĕçлеме пуçланисене тупса палăртатпăр, вĕсене ят илнĕ ăстасем хăйсен вăрттăнлăхĕсене тĕрлĕ семинар-презентацире, кружоксенче, мастер-классенче вĕрентеççĕ.

**– Мастер-классем ирттернин усси пур апла.**

– Паллах, районсенчен килекен ăстасемпе культурăпа вĕренӳ тытăмĕсенчи специалистсем хăйсен тăван тăрăхне таврăнсан кружоксем йĕркелеççĕ. Акă Комсомольски районĕнчи Йӳç Шăхальтен килнĕ клуб директорĕпе Людмила Козловăпа туслашрăм. Малтанласа вăл чăваш тĕррин пĕр çĕввине те тĕплĕн пĕлместчĕ, халĕ клубра тĕрĕ кружокĕ уçрĕ. Унăн вĕренекенĕсем эпир ирттерекен чылай мероприятие хастар хутшăнаççĕ.

**– Кирлĕ ĕç тăватăр эсир, чăвашлăха аталантаратăр…**

– Чăваш çемйинчи авалтан пыракан йăла чуна выртать. Ывăлсенчен чи кĕçĕнни тĕп килте юлать, ашшĕ-амăшне мĕн виличченех пăхса пурăнать. Шăллăм Георгий ялта тивĕçлĕ канăва тухнă аннепе пĕрле кун кунлать. Атте чире пула 5 çул каялла пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Аттепе анне тăван Тукай ялĕнчех çуралнă, пĕрлешсе 5 ачана кун çути кăтартнă. Юркка, эпĕ, Анатолий Шупашкарта тымар ятăмăр, асли Николай телейне Томск хулинче тупрĕ.

**– Тăватă ывăл хушшинче пĕр хĕр пулма ай-яй çăмăл мар, уйрăмах ялта…**

– Анне эпĕ каччa тухсан: «Икĕ алă та татăлчĕ манăн», – тесе куççульпех йĕчĕ. Пĕр енчен, кил-тĕрĕшри мĕн пур ĕç хĕрарăм хул пуççи çинех тиенет. Тепĕр енчен, ялти клуб директорĕнче ĕçлекен аннене концерт-спектакль хатĕрлеме, тĕрлĕ уяв йĕркелеме пулăшаттăм.

**– Эсĕ культура сукмакĕпе мĕншĕн харсăррăн утнине халĕ аван ăнкартăм.**

– Анне çемье çавăрса виçĕ ачаллă пулсан Çĕрпӳри культурăпа çут ĕç училищинче пĕлӳ пухнă, пĕр вăхăтрах ĕçленĕ те, вĕреннĕ те. Атте ăна пур енлĕн пулăшнă. Вăл ташлама тата юрлама çеç юратмастчĕ, анчах килти мĕн пур музыка инструменчĕ ун аллинче чĕрĕлетчĕ, нотăсене те хăй тĕллĕнех вĕреннĕ. Атте клубри инструментсемпе сĕтел-пукана та туххăмрах юсатчĕ. Анне ял тăрăх маçтăр шыраса утман. Халь акă шăллăм атте вырăнĕнче. Унăн алли те аттенни пекех ылтăн. Пĕтĕм ял ун патне пулăшу ыйтма пырать.

**– Пĕчĕк чухне аннӳ Валентина Владимировна сире пултарулăхпа çыхăннă мĕнлерех вăрттăнлăхсене уçса пачĕ?**

– Вăрттăнлăхсем-ши вĕсем? Юрласси, тĕрлĕ инструмента «калаçтарасси» – йăхран йăха куçакан пултарулăх. Эпир çемйипех гитара калама пĕлетпĕр, икĕ пичче те питĕ ăста купăсçă. Асаттепе асанне вĕрентекенсем пулнă: Варвара Константиновна тава тивĕçлĕ учитель ятне илейнĕ, Георгий Тарасовичăн кăкăрĕ çине Ленин орденне çакнă.

**– Кукаçупа кукаму та ялта ятлă çынсем пулнă тенĕччĕ эсĕ.**

– Кукамай Александра Ильинична – ялти пĕрремĕш хĕрарăм тракторист, арçын пекех вăйлă пулнă, 82 çулта чухне те çамрăксемпе тан утă çулнă, мĕн виличченех ĕне усранă, 90 çулччченех çĕр пичĕ çийĕн çирĕп утса çӳренĕ. Чăваш делегацийĕ шутĕнче йĕлтĕрпе Горький хулине çитнĕ, Михаил Калинина съездра парне панă. Кукаçи Владимир Кузьмич вăрçă хыççăн колхозра кукамай пекех трактористра тăрăшнă.

**– Эсĕ хăвна чăваш эстрадинче те ӳркенмесĕр шыратăн. «Мираж» ушкăн валли юрăсем хайлани пирки «Çамрăксен хаçатĕнче» вуланăччĕ.**

– Мана чăваш эстрадине ятлани питĕ кӳрентерет. Мĕншĕн тесен кашни юрăç хăй тĕллĕн, хăй пĕлнĕ пек тапăлтатать. Пулăшас вырăнне эстрадăна ура хураççĕ, шăл йĕреççĕ, йĕкĕлтеççĕ, такăнтараççĕ. Тĕрĕссипе, паянхи чăваш эстрада юхăмĕ чăвашлăха упраса хăварас ĕçре çирĕп вăйсенчен пĕри. Халăх театра сайра çӳрет. Концертсене вара ватти-вĕтти те пухăнать, чăвашлах юрлать, ташлать, фойере тăван чĕлхепех калаçать. Чăваш эстрада артисчĕсем Раççейри мĕн пур чăваша чăваш пулма пăрахтармаççĕ, тулайри йăхташăмăрсем патне çитсе тăван халăх юрри-кĕввипе хавхалантарса çунатлантараççĕ. Эстрада юхăмне сивлес вырăнне кирлĕ сĕнӳсемпе пулăшасчĕ.

**– Хальлĕхе чăвашсен хушшинче юрлакалатпăр-ха, анчах пире Раççейĕн пысăк сцени çине кăларасшăнах марри куç кĕрет. Тутарсен Алсу, Дина Гарипова пур. Пĕр шухăшласан – Мускав чиновникĕсен хушшинче мĕн чухлĕ чăваш ăшă пукан йышăнать, нивушлĕ вĕсене тăван халăх шăпи кăсăклантармасть?**

– Вĕсене паян урăх ыйтусем канăçсăрлантараççĕ курăнать.

**– Эсĕ Раççей шайне çĕкленме пултарнăшăн савăнам-ха!**

– Çĕкленсех çĕкленейрĕм-ши? 2003 çулта манăн ун чухнехи продюсер Сергей Скрижицкий Мускаври тусĕсем урлă «Мираж» солисткипе Маргарита Суханкинăпа паллашнă. Вăл ăна манăн юрăсене итлеттернĕ. Паллă артист пĕр эрнелĕхе Шупашкара килсе эпĕ хайланă 13 юрра Радик Иванов студийĕнче чĕм кĕртрĕ, 3 юрра «Просто Мираж» аудиоальбомĕ валли суйларĕ, ыттисене тĕрлĕ юрăç альбомне вырнаçтарчĕ. Манăн архивра 2 аудиоальбом упранать.

**– Раççей шайĕнче тухнă аудиоальбома алла тытсан чунра еплерех туйăм «ташларĕ»?**

– Хама лăпкă тытрăм. Тĕрĕссипе, эпĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсен вĕçĕнче çĕр-шыври паллă «Левостороннее движение» эстрада ушкăнĕпе те туслашнăччĕ. Анвар Тляуберзин Шупашкарта Сергей Марков студийĕнче эпĕ кĕвĕленĕ 5 юрра пуян сассипе илемлетрĕ. «Не надо слез» тата «ЛСД» аудиоальбомсене кĕртрĕ.

**– Санăн çитĕнĕвӳсем çинчен сахал çын пĕлет.**

– Мĕн мухтанмалли пур кунта? Кулленхи ĕç. Манăн юрăсен телейĕ – тĕнче шайне тухма пултарни çеç. Тепĕр тесен, Чăвашра мансăр та эстрада валли юрă хайлакан нумай... Юлашки çулсенче çамрăксенчен Константин Рязанов палăрчĕ. Пуласлăхĕ пысăк унăн. Типшĕм Сашука та айккине пăрса хăварас килмест. Унăн юррисене юратаççĕ, мĕншĕн тесен Сашук халăх чунне туять.

**– Унăн чăваш пурнăçĕпе çыхăннă философи сăввисене Марина Карягина поэт та ырлать. Шел те, профессионал мар хăш-пĕр сăвăç поэзи шайне çĕр çумнех антарса лартать. Ăста юрăçсем вĕсен сăввисене юрра хывни мана питĕ тĕлĕнтерет.**

– Йăла шайĕнчи тата сăмах купинчен тăракан юрăсем халăх патне питĕ хăвăрт çитеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем питĕ ансат, залра ларакан та, диск итлекен те кун пек юрăсене хăвăрт ас туса юлать, пĕрле ĕнĕрлеме пуçлать. «О, ман çинчен юрлать», – текенсем те тупăнаççĕ. Кунта эпĕ начаррине çеç мар, лайăххине те куратăп. Итлекен-куракан чунран савăнать, хавхаланать, киле çĕкленӳллĕ кăмăлпа таврăнать. Çӳллĕ шайри поэзи вĕсене хумхантарманшăн хурланар мар...

**– Сирĕн çемьере кам хуçа?**

– Упăшкаран ыйтас пуль */йăл кулать/*. Ахăртнех, пирĕн çемьере демократи. Кунçулăма сценăпа çыхăнтартăм та мăшăрăм манăн пурнăçпа пурăнма пуçларĕ, вĕрентекен ĕçне пăрахса çемье студине уçрĕ.

**– Кашни сăвăçах, кашни композиторах мăшăрне халалласа пĕр-пĕр ĕç хатĕрлет, эсĕ те ыттисенчен юлмастăн ĕнтĕ…**

– Валентина Тараватăн «Эс пурри вăл телей» сăвви чуна выртрĕ, упăшкана халалласа юрă кĕвĕлерĕм. Пĕррехинче Олег ĕçпе Чĕмпĕре темиçе кунлăха кайрĕ. Ывăла садике леçрĕм те пӳртре пĕчченех юлтăм. Чуна тунсăх чаршавĕ карса илчĕ. «Пĕччен» юррăн сăвви те, кĕвви те хăйсемех çуралчĕç.

**– Олегпа юнашар 21 çул кашни кун пĕрле. Ывăнса çитмерĕн-и ку юратуран?**

– Мĕн эсĕ?! Олега кунран-кун ытларах хисеплетĕп, юрататăп. Вăл – манăн пурнăç.

**– Енчен те сана шкулти пек «Эпĕ президент пулас тăк…» сочинени çырма сĕнсен унта мĕн пирки шăрçаластăн?**

– «Чăваш йăли-йĕркине упраса хăварассине мала кăларма тăрăшăттăм...»

**– Пĕлетĕн-и: эпĕ мĕн çырăттăм? «Манăн чи пĕрремĕш хушу çапларах пулĕччĕ: «Раççейри сахал йышлă халăхсене упраса хăварас тесе вырăнти чиновниксене пурне те икĕ чĕлхе вĕренме хушăп, документсене вырăнти чĕлхепе çырмалла, 1-мĕшĕнчен пуçласа 11-мĕш класс таран тата аслă шкулсенче ачасемпе çамрăксене мĕн пур предметпа вырăнти чĕлхепе вĕрентмелле». Çапла майпа эпĕ хам валли вилĕмсĕрлĕх палăкĕ лартăттăм».**

– Санăн фантаст сăвăç пулмалла. Тепĕр тесен, сăмахусенче тĕрĕслĕх пурах, вырăнти халăха çав наци йăла-йĕркине ăса хывса ӳснĕ çын çеç ăнланма пултарать.

**– Чăваш культурин пуласлăхне куратăн-и?**

– Халăхра чăвашлăх тепĕр икĕ ăруран пĕтет текен сăмах-юмах çӳрет. Çакна чун йышăнмасть. Пирĕн пуласлăх çук тени эпир хамăрăн паянхи ĕçе хакламанни, хамăра юратманни, хисеплеменни. Кар çĕкленсе ачасемпе чăвашла калаçар, йăла-йĕркене тымарлатар, культура шайне ӳстерер. Тĕнче тĕлĕнсе тăтăр. Ун чухне чăваш культурине нимĕн те хăратаймĕ.

**Альбина ЮРАТУ калаçнă.**

# Сирĕн яла пырса кĕрсен

*“Çамрăксен хаçачĕ” – Хĕрлĕ Чутай районĕнче*

## Мускаври пăкка пула

**Кремльти Ёлкăна кая юлса çитнĕ**



**Мускаври Кремльти Ёлкăна пирĕн республикăран 50 ача кайса килнĕ. Вĕсен йышĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Çĕнĕ Атикасси шкулĕнче 7-мĕш класра вĕренекен Анастасия Семенова та пулнă. Хĕр ача пĕлӳ çуртĕнчи ёлкăна та ёлкĕрчĕ – карап çинчен бала лекрĕ тейĕн. Настьăна шкула кĕнĕ-кĕменех пĕрле вĕренекенĕсем хупăрласа илчĕç. Пурте çул çӳревпе кăсăкланчĕç: çĕр-шывăн тĕп хулинчи чăрăш пысăк-и? Хĕл Мучи парни килĕшрĕ-и? Мĕн-мĕн асра юлчĕ?..**

Хĕр ача чи малтан уяв çинчен мар, хăна çурчĕ пирки калаçрĕ. Вăл 23-мĕш хутри 2421-мĕш пӳлĕмре çывăрнă. Унта вицĕ çĕр каçнине вĕренекен нихăçан та асран кăлармĕ. Ёлкăна пынă ачасене пĕрремĕш кунхине Измайлово паркĕпе паллаштарнă, истори тапхăрĕсем пирки каласа панă, «Фунтик» спектакль кăтартнă. Иккĕмĕшĕнче вĕсем тĕп уявра савăннă. Настя каласа кăтартнă тăрăх – Мускаври пăкка пула вĕсем унта вăхăтра çитеймен, çавна май чăрăш йĕри-тавра юрласа-ташласа савăнайман. Çĕнĕ çул уявĕ залра тăсăлнă, унта спектакль кăтартнă. Пушă вырăн юлманран Чăваш Енрен кайнисене балкон çине лартнă. Настя унти 10-мĕш рете лекнĕ. Кая юлнăран спектакль сюжетне те ăнкарайман. Юрать, ачасене парнесĕр хăварман. Пурне те «Хĕл Мучи» шăккалат тата канфет тултарнă хутаç тыттарнă. Виççĕмĕш кунхине ачасем Космонавтика музейĕнче пулнă...

Настя çĕр-шывăн тĕп Ёлкине кайма мĕншĕн тивĕçнĕ-ха? Вăл – отличница, районти тĕрлĕ олимпиада-конкурс çĕнтерӳçи. 7-мĕш класра вĕренекенскершĕн 2013 çул çул çӳревпе асра юлĕ. Настя пĕлтĕр Мускава, Анапăна çитнĕ. Кăçал вăл ытти хулара пулма ĕмĕтленет. Хальлĕхе Настя телефонри сăн ӳкерчĕксене пăхать. Унта унăн çĕнĕ тусĕсем, çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче ӳкернĕ илемлĕ вырăнсем сăнланнă.

**Любовь ПЕТРОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**



## Модельера вĕренесшĕн

**Çĕнĕ Атикасси шкулĕнче вĕренекен Ирина Пандакова тантăшĕсенчен мĕнпе уйрăлса тăрать-ха? Вăл лайăх паллăсемпе вĕреннисĕр пуçне алă ĕçĕпе те кăсăкланать. Хĕр ача каласа кăтартнă тăрăх – çак туртăм ăна асламăшĕнчен Мария Алексеевнăран куçнă. Вăл мăнукне çĕлеме, çыхма вĕрентнĕ.**

Ирина 4-мĕш класра чухне алла йĕп пĕрремĕш хут тытнă. Çакăн хыççăн вăл пушă вăхăт тупăнсанах мĕн те пулин ăсталама ларнă. Пурăна киле ку кăсăклану хĕрĕн чун киленĕçĕ пулса тăнă. Халĕ асламăшĕ вĕрентсе пынипе Ирина çекĕлпе минтер пичĕ çыхать. Ăсталăхне хăй тĕллĕн те аталантарать – тимĕр шапапа кăмпасене вăл Интернетран тупнă схемăсене пăхса çыхнă.

Ирина спорта та юратать. Çĕнĕ Атикасси шкулĕн команди пĕлтĕр «Президент ăмăртăвĕн» республикăри тапхăрĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Çавна май Краснодар крайĕнчи Анапа хулинче Раççейри шкул ачисен спорт конкурсне хутшăнма тивĕç пулнă. 8 ачаран тăракан ушкăнра Ирина та пулнине палăртма кăмăллă. Ăмăртăва вĕсене физкультура учителĕ Светлана Петрейкина хатĕрленĕ. Вĕрентекен хĕр ача пултаруллă та маттур иккенне палăртрĕ, унăн спортри çитĕнĕвĕсемшĕн хĕпĕртенине пĕлтерчĕ. Ăмăртура кашнин кăтартăвĕ пĕлтерĕшлĕ. Паллах, çĕнтерӳçĕсене палăртнă чухне балсен пĕтĕмĕшле хисепĕ ушкăнри ачасен пултарулăхĕнчен те нумай килет. Çавăнпа Çĕнĕ Атикассисем мала тухнинче Иринăн тӳпи те пур.

13 çултискер ӳкерӳ, геометри урокĕсене кăмăллать. Акăлчан чĕлхине юратать. Ăна 3-мĕш класранпах вĕренет, ют чĕлхепе калаçма та пултарать.

Ирина дизайнер-модельер ĕçне килĕштерет. Пушă вăхăтра ӳкерет, çут çанталăка çеç мар, хĕрсен кĕпе моделĕсене е ытти тумтире шурă хут çине куçарать. Хăйĕн ĕçĕсене вăл пухса пырать. Унăн моделĕсем хăçан та пулсан пысăк сцена çине тухасса, ăна хĕр-упраçпа яш-кĕрĕм юратса тăхăнасса шанать вăл.

Чун киленĕçĕ Иринăна пурăнма, вĕренме хавхалантарать. Вăл килти ĕçсене туса пĕтерсенех алла çекĕл тытать е кăранташпа ӳкерет. Хĕллехи каникула та пике ахаль ирттермен – хăй аллипе парнесем ăсталаса тăванĕсемпе юлташĕсене Раштав уявĕнче савăнтарнă.

Пандаковсем пĕртен пĕр хĕрĕн çитĕнĕвĕсемпе савăнаççĕ, ăна пур енлĕн хавхалантарма тăрăшаççĕ. Иринăн ĕçĕсем ăнса пырасса, ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕрессе шанас килет.

**Любовь ПЕТРОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Ирхи шуçăмпа тăраççĕ те...

**Кивĕ Атикассинче пурăнакан Станиславпа Галина Гордеевсем 2002 çулта çемье çавăрнă. Халĕ вĕсем виçĕ ачана ура çине тăратассишĕн талпăнаççĕ. Никита – 11 çулта, Лена – 10-ра. 6-ри Лиза вара садике çеç çӳрет-ха.**

**Паллах, виçĕ ачана тумлантарма-çитерме çăмăл мар. Ялта ĕç çукки те самаях ура хурать. 36 çулти Галина ялти клубра методистра ĕçлет. Çемье пусĕ ăçта-ха?**

– Хăвăрах пĕлетĕр ĕнтĕ – Мускавра, – йăл кулчĕ Галина. Çапла, Станиславăн аякка çӳреме тивет. Вăл 10 çул ытла ĕнтĕ çĕр-шывăн тĕп хулинче стройкăра вăй хурать. Тепĕр тесен, Кивĕ Атикассинче ĕçлеме аякка çӳрекен нумай. Уйрăмах – çамрăксем. 32-ри Станислав хăш чухне Мускава 1-2 уйăхлăха тухса кайни те пулать. Тăван тăрăха таврăнсан, паллах, нумай тăраймасть – каллех çула тухмалла. Çавăнпа килти чылай ĕç Галина çине тиенет. Юрать, кил-тĕрĕшре ăна хунямăшĕ Елизавета Степановна пулăшать. Вăл пӳртре тирпейлет, чашăк-тирĕк çăвать. Кирлĕ тĕк – ачасене те пăхать. Кинĕпе хунямăшĕ килĕштерсе пурăнаççĕ. Вырльăх-чĕрлĕх пăхасси – Галинăн ĕçĕ. Вăл ирхи шуçăмпа тăрать те картише васкать. Унта вара ĕç сахал мар: 2 ĕне, пăрусем, сурăхсем, сыснасем... Вырльăх-чĕрлĕхе пăхнă хыççăн ачасене шкула ăсатмалла, кайран сĕт кайса памалла. Гордеевсемшĕн ку – тупăш тумалли мел.

– Халĕ литр сĕте 20 тенкĕпе пуçтараççĕ. Çулла, паллах, йӳнелĕ. Апла пулин те сĕт парса укçа пухма май пур, – терĕ Галина Гордеева. Вăл качча тухиччен хулара вĕреннĕ. Анчах унта юлма килĕшмен.



– Станиславпа пĕрлешсен яла пурăнма куçрăм. Халĕ хулана пачах каяс килмест, кунта лайăхрах. Эпĕ пахчара тăрмашма юрататăп. Ытларах чечексене кăмăллатăп, çавăнпа çулла кил таврашĕнче куçа йăмăхтараканскерсем илем кӳреççĕ. Йăрансем çинче ĕçлеме те питĕ килĕшет. Пахча çимĕç акса-лартса ӳстеретпĕр. Çемье пысăк, çавăнпа хамăр валли çеç туса илетпĕр, – каласа кăтартрĕ Галина. Çемье пуçĕ аякра чухне тилхепене тытса пыма йывăр мар-ши?

– Станислав каять те килет – хăнăхнă ĕнтĕ, – хуравларĕ хĕрарăм. – Ачасем кăшт ӳсрĕç, кил-тĕрĕшре пулăшаççĕ. Çулла ĕç уйрăмах нумай. Çапах аптăрамастпăр: упăшка килте мар чухне ачасемпе, хунямапа пĕрле утă çулса типĕтетпĕр, йăрансем çумлатпăр, – калаçăва вĕçлерĕ Галина Гордеева.

Çемье ялта тĕпленни, хулана туртăнманни савăнтарчĕ. Çамрăксем – вăй. Вĕсем ял шăпишĕн яваплă. Гордеевсем пек шухăшкăмăллă яш-хĕр ытларах пулсан чăваш ялĕ ĕмĕр-ĕмĕр «сывлĕ». Шел те, вĕсене пĕр пулăм ура хурать – ĕç çукки. Тен, çитес вăхăтра ларутăру лайăх енне улшăнĕ? Ку Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева та пăшăрхантарать. Вăл пĕлтĕрхи раштав уйăхĕнче ЧР Патшалăх Канашне янă Çырура та кун пирки асăнчĕ. Унăн шухăшĕпе – арçыннăн аякка ĕçлеме çӳремелле мар, çемьепе пĕрле пулмалла. Ялсенче çамрăк çемьесене тĕпленмелли услови ытларах туса парсан тем пекехчĕ.

**Ирина АЛЕКСЕЕВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

ПУЛТАРУЛĂХ

## Урам варринче – тăвайкки, юр кĕлетки



**Иртнĕ çул вĕçĕнче Кивĕ Атикассине кĕрсенех культура çурчĕ çывăхĕнчи лапам хăй патне илĕртетчĕ. Унта капăрлатнă чăрăш тавралăха илем кӳретчĕ. Çывăхра Хĕл Мучипе Юр Пике те «саркаланатчĕç». 2014 çулăн тĕп палли лаша çула тухма хатĕрленнĕччĕ. Кивĕ Атикассисем çывхарса килекен Олимпиада пирки те манман – юртан упа ăсталанăччĕ, унăн кăкăрĕ çине вăййăн пилĕк ункăран тăракан паллине вырнаçтарнăччĕ. Икĕ пингвинпа икĕ матрӳшке те илемлĕччĕ. Çанталăк витĕмне пула вĕсем паян кун сыхланса юлни иккĕлентерет, апла пулин те кӳлепесем ял-йышăн Çĕнĕ çул умĕнхи кăмăлне çĕклеме ĕлкĕрнĕ. Эппин, вĕсене тăвакансем пирки асăнса хăварни те ытлашши пулмĕ. Капăр çак кӳлепесене кам ăсталанă-ха? Вĕсене тăвас шухăш чи малтан камăн çуралнă? Ыйтусене Кивĕ Атикасси культура çурчĕн ертӳçи Владимир Иванов хуравларĕ.**

Владимир Николаевич çак должноçра виççĕмĕш çул ĕçлет. Вăл каланă тăрăх – кашни уявах клубра анлăн паллă тума тăрăшаççĕ. Çĕнĕ çула пĕр уйăх маларах хатĕрленме пуçлаççĕ.

– Урамри кӳлепесене культура ĕçченĕсем тума шухăшларĕç. Кунашкал ĕçе эпир пĕлтĕр те пурнăçланăччĕ. Кăçал юртан тунă сăнар нумайланчĕ. Пĕтĕмпе 12 кӳлепе ăсталарăмăр. Ираида Аксакова библиотекарь, клуб ĕçченĕсем Галина Гордеевăпа Вячеслав Бармин темиçе кун тăрăшрĕç. Хĕл Мучипе Юр Пикене, лашана сăрласах илемлетнĕччĕ. Çанталăк ăшăтнăран, шел те, кӳлепесем малтанхи капăрлăхне çухатрĕç, анчах вĕсем пур пĕрех ял çыннисене илĕртме пăрахмаççĕ. Ачасем юмахри сăнарсен çывăхĕнче сăн ӳкерĕнеççĕ. Тата эпир кашни çулах тăвайкки тăватпăр. Çăварнире çамрăксем те, ватăсем те çунашкапа ярăнаççĕ. Ĕлĕкех çакă чир-чĕртен хăтарнине ĕненнĕ, – сăмах çăмхине сӳтрĕ Владимир Николаевич.

Кивĕ Атикасси ял тăрăхĕнче пурăнакансем Çĕнĕ çул умĕн çурт умне илем кĕртеççĕ: чăрăша капăрлатнипех çырлахмаççĕ, юртан тĕрлĕ кӳлепе те тăваççĕ. Нумаях пулмасть администраци ĕçченĕсем кил-çурт умне капăрлăх кĕртнĕ çемьесене палăртнă. 1-мĕш вырăна Анат Çĕрпӳкассинче пурăнакан Сухаревсем тивĕçнĕ. Вĕсем кил умĕнче Хĕл Мучипе Юр Пике тунă, кӳлепесем илемлĕ пулса тухнă.

Кăçал – Культура çулталăкĕ. Çавна май ку тытăмра ĕçлекенсен вун-вун мероприяти ирттермелле. Ирина Аксакова библиотекарь Кивĕ Атикасси культура çуртĕнче ĕçленĕ çынсем çинчен презентаци хатĕрлесшĕн. Культура çуртĕнчи «Шупуç» фольклор ушкăнĕ кăçал та ял халăхне хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарĕ. Вĕсем пĕлтĕр те районти «Иксĕлми Чутай çăл куçĕсем» фестивальре 3-мĕш вырăн йышăннă. Ушкăн ялти уявсенче çеç мар, уйрăм çынсен юбилейĕсене те çӳрет, кĕрекене юрă-ташăпа илемлетет.

**Любовь ПЕТРОВА.**



## Светке чупакансене йăвапа хăналаççĕ

*Ах, кинеми, кинеми,*
*Çитрĕ акă Сурхури.*
*Пире кукăль памасан*
*Сурăх ури хуçăлтăр!*
*Пире кукăль парсассăн*
*Сурăх ури сыпăнтăр! –*

çапла юрланă ĕлĕк чăвашсем кăрлач уйăхĕн 7-мĕшĕ çитсен. Праçник пĕр эрнене тăсăлнă. Сурхури – чăвашсен ĕлĕкхи уявĕ. Пирĕн мăн асаттесемпе асаннесем праçнике тĕплĕн хатĕрленнĕ. Уяв çывхарас умĕн сăра вĕретнĕ, мăйăр, хĕвел çаврăнăш, кавăн вăррисем хатĕрленĕ. Сурхурире вара пăрçа кукăлĕ пĕçернĕ, шӳтернĕ пăрçа ăшаланă, тыр-пул ăнса пултăр, выльăх-чĕрлĕх лайăх ĕрчетĕр тесе ятарлă йăла-йĕрке ирттернĕ. Чылай тăрăхра уява ачасем пуçăннă: кашни пӳрте кĕрсе кил хуçисене уяв ячĕпе саламланă. Аслисем те Сурхурире пĕр-пĕрин патне хăнана çӳренĕ, пăрçапа, мăйăрпа, кукăльпе хăналанă, «Выльăх-чĕрлĕх пăрçа пек ĕрчетĕр, шӳтернĕ пăрçа пек самăр пултăр, ăшалани пек çирĕп пултăр», – тенĕ. Халĕ тĕрлĕ тăрăхри чăвашсем Сурхурие епле паллă тăваççĕ-ши? Кивĕ Атикасси ял тăрăхĕнче пурăнакансем хăйсен йăли пирки каласа кăтартрĕç.

Валентина Мироновăпа Зоя Иванова – аппăшĕпе йăмăкĕ. Валентина – Яманкассинче, Зоя Кушлавăшра пурăнать. Çак тăрăхра кашни çулах Сурхурире светке çӳреççĕ. Кивĕ Атикассинче çеç ку тахçантанпах йăлара çук. «Светке çӳресен пушар тухать», – теççĕ çак ялта. Мĕншĕн çапла калаççĕ-ха? Ыйтăва хуравлакан тупăнмарĕ. Ахăртнех, çак сăмахсем ĕлĕкех тухнă.

Яманкассинче кăрлач уйăхĕн 7-мĕшĕ çитсен – тарса пытан! Ун чухне каçхине урама тухма та шикленмелле: çул çинче чупакан светкесене тĕл пулсан – ай-яй. Палламалла мар тумланнăскерсем хĕрхенмеççĕ.

– Тĕл пулнă çынна юр çинче йăвалантаратпăр, хамăр та йăванатпăр, – каласа кăтартрĕ Зоя Иванова. – Кăçал светке çӳреме ĕлкĕреймерĕмĕр-ха. Вăхăт пур: тумланса тухăпăр. Сурхурире йăва пĕçеретпĕр. Пĕлтĕр кĕсьене йăва чикрĕмĕр те ял тăрăх çӳрерĕмĕр. Ача-пăчана та тумлантартăмăр. Чылайăшĕ светкесем киле кĕрсен савăнать, хăваласа ямасть. Паллах, алăка питĕрекен те пур. Ытларах ватăсем хĕпĕртеççĕ, «Килĕр, килĕр!» – тесе алăка уçаççĕ. Пире пĕлтĕр йăвапа хăналарĕç. Пӳрте кĕрсен урайне пăрçа сапатпăр, «Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх ĕрчетĕр, пирĕн татах килмелле пултăр», – тетпĕр.

– Пĕлтĕр светке чупакансем пирĕн пата кĕресшĕнччĕ, анчах алăка уçмарăм. Вĕсем хыççăн урайĕнчи пăрçана пуçтармалла вĕт. Алăка шаккарĕç-шаккарĕç – кĕреймерĕç. Пан улми, кукăль илсе тухса вĕсене çитертĕм, – иртнине йăл кулăпа аса илчĕ Çĕнĕ Атикасси шкулĕнче ĕçлекен Римма Натай.

Кашни çулах светке çӳренĕрен Зоя Ивановăна, Валентина Мироновăна тата вĕсен ушкăнне ял халăхĕ пĕлекен пулнă. «Ĕнер эсирех пулнăха», – теççĕ вĕсене тепĕр кунхине курсан.

Ача чухне эпир те светке тăхăнса урама тухаттăмăр, килĕрен çӳреттĕмĕр, пăрçа сапаттăмăр. Çынсем ан паллачăр тесе пите хура колготкăпа хуплаттăмăр. Хĕрлĕ Чутайсем вара çĕтĕк колготкăпа нихăçан та усă курмаççĕ.

– Чăвашсем ĕлĕк светке çӳренĕ чухне сăхман е кĕрĕк тăхăннă, пите пиртен çĕленĕ шурă тутăрпа хупланă, урана çăпата сырнă. Ача чухнехине ас тăватăп: шăллăм патĕнчен таврăннă чухне светке чупакансене тĕл пултăм. Мана тытрĕç те юр çинче йăвалантарчĕç. Эх, юрпа сапрĕç кăна. Паллах, эпĕ, пĕчĕкскер, хăрарăм. Халĕ те çак йăла манăçа тухман – светкесем урампа пыракан çынна юр çинче йăвалантараççĕ, хĕнеме те пултараççĕ. Ĕлĕкрех пирĕн тăрăхра çакнашкал йăла пурччĕ: светкесенчен пĕрне палларĕç тĕк унăн усалран тасалмашкăн вакка чăмса тухмаллаччĕ. Никама та палламасан хайхискерсем пĕрле пухăнса савăнаççĕ, юрлаççĕ-ташлаççĕ. Ытларах çил-тăманлă çанталăкра светке çӳреççĕ. Ун чухне ура йĕрĕ юлмасть, – каласа кăтартрĕ ачасене тăван тăрăх культурине 14 çул вĕрентнĕ Алевтина Алексеева. Вăл та светке чупнă. Ушкăн ертӳçи /ăна хăйсем суйлаççĕ/ пушăпа çатлаттарса çӳрет. Светкесем çынсен хапхи умне вутă пуленкисем пăраххаççĕ. Ку кăна мар: мунча пури ларать тĕк ăна сӳтме пултараççĕ. Хапха умне пĕрене тăратса хăвараççĕ. Ирхине кил хуçи тăруках ăна курсан хăраса каять паллах.

Валентина Мироновăн мăшăрĕ Николай – клуб ĕçченĕ. Вăл вара ăна пулăшать. Валентина Николаевна светке чупакансемпе пĕрле çӳрет. Вăл кил хуçисене улталама ăста: сасă парать те лешсем ăна палласа алăка уçаççĕ.

– Эпир чăвашсен йăлипе килĕшӳллĕн пите пир тутăрпа хуплатпăр. Эпĕ чăваш тумĕпе капăрланатăп, çăм нуски тăхăнса çăпата сыратăп. Нуски вĕççĕн сивĕ мар. Светке чупса сивве туймастăп та. Мăшăрăмпа пилĕк ача çуратса ӳстертĕмĕр. Вĕсене те светке çӳреме илсе тухаттăм. Халĕ пурте тĕрлĕ енне саланчĕç ĕнтĕ. Ун чухне пĕчĕкскерсем ывăнатчĕç те аслисенчен юлатчĕç, килелле утатчĕç, – калаçăва тăсрĕ Валентина Миронова.

Шел те, чăвашсен чылай йăлийĕрки манăçа тухса пырать. Çав шутра – Сурхури те. Аслăрах ӳсĕмрисем темиçе çул каялла светке чупасси йăлара пулнине ас тăваççĕ пулĕ. Ун чухне кашни ялта тенĕ пекех çӳренĕ. Аслисем светке тăхăнсан пĕрле кучченеç пуçтармалли кутамкка, кĕленче йăтса тухни пирки каласа кăтартатчĕç. Вĕсем кайран пĕрле пухăннă, маскăна хывса кучченеçпе хăналаннă. Кивĕ Атикасси ял тăрăхĕнче Сурхурире светке çӳресси халĕ те упранса юлни савăнтарать. Пур тăрăхра та чăвашсен йăлине асра тытсан тем пекехчĕ. Халăхăмăрăн «ылтăн çӳпçине» чухăнлатас марччĕ. Чăвашсен авалхи уявĕсене, ĕлĕкхи евĕрех мар пулин те, сыхласа хăварасчĕ.

**Ирина АЛЕКСЕЕВА.**

## Чун туртнă ĕçшĕн грант парасса шанман

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Пĕлтĕрхи раштавăн 21-мĕшĕнче проектпа килĕшӳллĕн Пĕтĕм Раççейри Хĕл Мучисен чупăвне ирттернĕ. Унта республикăри 400 ытла çамрăк çын хутшăннă.

– Пирĕн проект ЧР Вĕренӳ министерстви, Шупашкар хула администрацийĕ пулăшнипе пурнăçланать. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче «Ман хыççăн чуп!» проект пирки асăнни те пирĕн мероприятисем çӳллĕ шайра иртнине çирĕплетеççĕ, – хавхаланса калаçрĕ Катя. – «Ман хыççăн чуп!» проектпа ĕçленĕрен вăй-халăм чакмасть. Пачах урăхла. Спортпа туслашни çынна яланах хаваслăх кӳрет, çирĕплетет. Эпĕ грант илесси пирки шухăшламанччĕ, çавăнпа вăл маншăн кĕтменлĕх пулчĕ. Паллах, нухратпа Чăваш Енри проектăн чупу клубĕсене аталантарма тата çĕнĕ мероприятисем йĕркелеме усă курăпăр, – калаçăва вĕçлерĕ Екатерина Устинова.

Унран тĕслĕх илмелли, чăнах та, нумай. Вĕренӳре те, общество ĕçĕнче те хастар вăл. Шупашкарти 1-мĕш лицейрен кĕмĕл медальпе вĕренсе тухнăскер, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн строительство факультетне хĕрлĕ дипломпа пĕтернĕскер сывă пурнăç йĕркине çирĕп пăхăнать. Катя ирсерен гимнастика тăвать, чупать, велосипедпа, сноубордпа, йĕлтĕрпе ярăнма кăмăллать. Шашка-шахматла, сĕтелçи теннисла выляма та, бассейна çӳреме те вăхăт тупать. Пике кухньăра та хаваспах тăрмашать, тутлă та усăллă апатçимĕç янтăлать.

**Елена ТРОФИМОВА.**

ÇИТĔНӲ

## “Шупашкарта та шоу йĕркелесчĕ”

**Çапла ĕмĕтленет “Битва хоров” проекта хутшăннă Мария Максимова**

**Чăваш Енре пултаруллă яш-хĕр питĕ нумай. Чылайăшĕ юрлама, ташлама кăмăллать, анчах Раççей шайĕнче пысăк сценăна парăнтаракан йышлах мар. Маша Максимова вара Мускаври чи пысăк концерт залĕнче, 10 пин çын вырнаçмалăх «Главкино» павильонра, юрлама пултарнă. Вăл Раççей телекуравĕн «Битва хоров» телепроектĕнче пултарулăхне кăтартнă.**



**Мария Максимова Олег Газманов юрăçпа юнашар.**

– Пĕлĕшĕм Саша Голубева кастинг ирттессине пĕлтерчĕ. 2013 çулхи юпа уйăхĕнче пĕр шăмат кун Мускава кайрăмăр. Вырсарни кун Геологи музейĕнче йĕркеленĕ кастинга хутшăнтăмăр. Жюри членĕсен йышĕнче Дмитрий Маликов та пурччĕ. Эпĕ вырăс юррине хатĕрленĕччĕ, анчах ют çĕр-шыв юррине шăрантармаллине пĕлсен Кристина Агилера репертуарĕнчине аса илтĕм. Хама тĕрĕслес тĕллевпе çеç кайнăран юрланă вăхăтра пачах хăрамарăм, хама шантăм, çавăнпа пулĕ мана тӳрех йышăнчĕç. Сашăна вара ăнмарĕ. Вăл çапах парăнмарĕ – Виктор Дробыш продюсер Питĕрте ирттерекен кастинга кайрĕ. Унта ăна йышăнчĕç, – калаçу пуçарчĕ Маша.

Виçĕ эрнерен Мария патне Мускавран шăнкăравланă. Шоура Слава юрăç ушкăнĕнче Дон çинчи Ростов хулишĕн юрламаллине пĕлтернĕ. Маша мĕн илтнине ĕненмен. Мускава кайма хирĕçлемен пулин те И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУн музыка педагогикин факультечĕн 5-мĕш курс студентки вĕренӳре тантăшĕсенчен юласран шикленнĕ.

– «Битва хоров» проекта хутшăнни хăех пысăк пĕр шкул. Кунта пире Гнесинăсем ячĕллĕ музыка училищин, ГИТИС педагогĕсем, Англи хореографĕсем, стилистсем икĕ уйăх çурă тĕрлĕ енлĕ пĕлӳ пачĕç. Пире, проекта хутшăнакан 160 çынна, Мускав çывăхĕнчи кану çуртне вырнаçтарчĕç. Эпир Сашăпа пĕр пӳлĕмре пурăнтăмăр. Çулшăн, апатçимĕçшĕн, тумтиршĕн пĕр пус та тăкакламарăмăр. Стилистсем кашни номер умĕн юрăççем валли пурин кĕлеткине виççе костюмран пуçласа аялти тум таранах çĕлесе е туянса пачĕç. Вокал педагогĕсем кашни номер валли сасă уйрăмлăхне пăхса солистсене суйларĕç. Пирĕн ушкăнра 20 хĕрччĕ. Слава гастроль турне пăхмасăрах концертсем хыççăн пирĕн пата килетчĕ. Раççей эстрада юрăçипе çывăх туслашрăмăр, мăн кăмăллă мар вăл, – каласа кăтартрĕ студентка.

«Чăваш Ен хĕрĕсем мĕншĕн Шупашкаршăн мар, Маша – Дон çинчи Ростов, Саша вара Питĕр командисемшĕн юрланă?» – тейĕ хăшĕ-пĕри. Проектра паллă 8 юрăç 8 хула ушкăнне пуçтарнă, анчах ку юрăççем çав хуласенчен пынине пĕлтермест. Кашни ушкăнрах Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен пухăннă яш-хĕр пулнă.

– Эпир пĕр-пĕрне кĕвĕçмен, ăмсанман. Кăмăллăн калаçаттăмăр. Кунсерен тенĕ пекех Раççейĕн паллă çыннисене Лолитăна, Нюшăна, Стас Пьехăна, «Банд`эрос» ушкăн юрăçисене курни хăех мĕне тăрать! Доминик Джокерпа туслашрăмăр, вăл – ырă кăмăллă çын. Сăн ӳкерĕнме ыйтсан нихăçан та хирĕçлемест, сĕнӳ-канашпа пулăшать. Жасминпа Татьяна Буланова, Олег Газмановпа Виктор Дробыш нумай пĕлӳ пачĕç. Эпир хальхи вăхăтпа килĕшӳллĕн улăштарнă халăх юррисене шăрантартăмăр. «Пуканесем» номерте мана солист пулма шанчĕç, Потап юрăçпа ташлама тӳр килчĕ. «Виновата ли я?» юрă чи ăнăçли пулчĕ, çапах халăх сахал сасăланипе тухса ӳкрĕмĕр. Ку ытти ушкăншăн тĕлĕнмелле пулчĕ, мĕншĕн тесен мĕн пур вĕрентекен пирĕн номере чи лайăххисен шутне кĕртнĕччĕ. Эпир питĕ пăшăрхантăмăр, – каларĕ те каларĕ Маша.

Кашни эрне вĕçĕнчех пĕрер ушкăн тухса ӳкнĕ пулин те проект вĕçленсен 160 юрăçа каллех пĕрле пуçтарнă, гала-концерт йĕркеленĕ. Яш-хĕр пĕр-пĕрне курсан савăннă. Марийăн раштавăн 21-мĕшĕнче – çуралнă кунĕ. Иртен пуçласа каçченех ăна 160 çын пыра-пыра саламланă. Ахăртнех, çак çуралнă кун хĕршĕн чи асра юлни пулĕ.

Маша тăваттăмĕш çул ĕнтĕ Çĕнĕ çул умĕн Юр Пике пулнă. 2011 çулта вăл Шупашкарта «Çулталăк Юр Пики» конкурсра çĕнтернĕ. Диплом илсен вăл консерваторире пĕлĕвне тарăнлатма, студи уçма, Шупашкарта та пысăк шоу йĕркелеме ĕмĕтленет. Паллах, ку унран кăна килмест. Университетра нота грамотине ăса хывнăскерĕн, фортепиано калама вĕреннĕскерĕн, дирижер ăсталăхне туптанăскерĕн сасси чăнахах та вăйлă.

– Проекта хутшăннă хыççăн хавхалану çуралчĕ, эпĕ мĕн тăвас тенине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме пултаратăп пек туйăнать. Хамăра шанмалла, пултарулăха кăтартма вăтанмалла мар. Хамăра ĕненсен кăна пире ыттисем ĕненĕç, – шухăшне палăртрĕ Маша Максимова.

**Алена ТИМКОВА.**